ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Сентябрь 12 ШАМАТКУН
№ 179 (9088)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ Мускава килсе çитнĕ (1 стр.).
Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн Председателĕ Ким Ир Сен Мускава килсе çитсен вокзалта тухса каланă сăмах (1 стр.).
Сесси дневникĕ (2 стр.).
Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи бюджечĕ çинчен йышăннă закон (2 стр.).
Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ тата 1952 çулхи бюджета пурнăçлани çинчен тунă доклада сÿтсе явни (3 стр.).
Чăваш АССР-ĕнче халăха вĕрентес ĕç мĕнле тăни тата ку ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен тунă доклада сÿтсе явни (3 стр.).
Германири рабочи класăн пĕрлĕхĕшĕн, фашизма тата вăрçа хирĕç! (4 стр.).
Гоминдан ушкăнĕн вăрă-хурахла ĕçĕсене хирĕç. Чехословаки ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлтерни (4 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн бюровĕн сессийĕ (4 стр.).

Шупашкар хулинчи парторганизацин XV-мĕш конференцийĕ

Паян Шупашкар хулинчи парторганизацин XV-мĕш конференцийĕ уçăлать. Вăл партин XIX-мĕш съезчĕн тата СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсемпе хавхаланнă ĕçсынисем хушшинче политикăлла тата производствăлла çĕкленÿ вăйланнă лару-тăрура пулса иртет. Çак решенисем пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн вăй-хăватне малалла тĕреклетме, совет çынннисен ялан ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене пур енчен те тивĕçтермелле, май парассĕ. Совет халăхĕ коммунизм строительствин аслă задачисене пурнăçлас тĕлĕшпе хăйĕн вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлет.

Шупашкар хулинчи парторганизацин XIV-мĕш конференцийĕ пулнăранпа çулталăк иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче хулари парторганизаци политикăпа организацилĕх тĕлĕшĕнчен тата ытларах тĕрекленчĕ. Парти организацийĕсем хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырасси лайăхланчĕ.

Хулари партконференци умĕнче çакăн пек задача тăрать: хулари парторганизацисен пысăк тата нумай енлĕ ĕçĕсене пĕтĕçтерсе тишкерсе тухмалла, хуçалăх, культура строительствине ертсе пырас ĕçри, парти ĕçĕнчи тата идеологилле ĕçри йăнăшсемпе çитменлĕхсене тарăнăн уçса палăртмалла, çак çитменлĕхсене хăвăртрах тÿрлетмелли тата КПСС хула комитечĕпе пуçламăш парторганизацисен пĕтĕм ĕçĕсене малалла лайăхлатмалли майсене палăртса хумалла.

Хулари парторганизацин ĕçĕнче халлĕхе пысăк çитменлĕхсем пур-ха.

Нумай предприятисенчи, çавăн пекех стройкăсенчи пуçламăш парторганизацисĕн ĕçне чылай лайăхлатни кирлĕ. Хула промышленноçĕ продукци туса кăлармалли плана, пĕтĕмĕшпе илсен, пурнăçласа пырать. Иртнĕ çулхи производство планне 101,2 процент, кăçалхи сакăр уйăхри плана 105,5 процент тултарнă. Иртнĕ çулти çак вăхăтрипе танлаштарсан, продукци туса кăларасси 20 процент ÿснĕ. Хулари чылай предприятисем продукци туса кăлармалли задание тăтăшах пурнăçласа пыраççĕ. Çав предприятисем хушшинче Электроаппаратура завочĕ малта пырать. Завод коллективĕ Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура темиçе хутчен те малти вырăна тухрĕ.

Нумай предприятисем продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли плана тултарчĕç тата ирттерсе тултарчĕç, продукци пахалăхне лайăхлатрĕç.

Анчах КПСС хула комитечĕ партин XIX-мĕш съезчĕ мĕнпур промышленность предприятийĕсен ĕçне лайăхлатма хушса хăварнине пурнăçлайман-ха. Кăçал 18 предприяти çителĕксĕр ĕçлет, вĕсем производство планне тултараймаççĕ. Вĕсем хушшинче кондитер фабрики, Сосновкăри вăрман завочĕ, Ленин ячĕпе тăракан çĕвĕ фабрики, чăлха фабрики, тирсăран комбиначĕ, хулари промкомбинат, Приволжски вăрманпромхоз, тумтирсем çĕлекен мастерскойсем тата ыттисем те. «Водосвет» тресчĕ çаплах начар ĕçлет. Çавна пула хула час-часах çителĕклĕ таран электроэнерги илсе тăраймасть.

Капитальнăй строительство хăвăртлăхĕсем пачах çителĕксĕр. Правительство промышленность, çурт-йĕр тата культурăпа йăла строительстви валли уйăрса паракан укçа-тенкĕпе туллин усă кÿраймастпăр. 1952 çулта хулара капитальнăй строительство планне 75,6 процент, кăçалхи сакăр уйăх хушшинче вара плана 70,1 процент кăна тултарнă. «Легпромстройăн» 11-мĕш тресчĕ юлашки виçĕ уйăхра хăйĕн планне тултарса пычĕ, анчах та хĕллехи тата çуркуннехи вăхăтра кая юлнине пĕтерес тĕлĕшпе ытла та вăраххăн ĕçлет. «Чувашстрой» тресчĕ пачах çителĕксĕр ĕçлет. «Росмясомолстрой» строительствăпа монтаж управленийĕ строительство планне тултараймасть.

Промышленность предприятийĕсем халăха кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе çаплах çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Чылай предприятисемпе стройкăсем çителĕксĕр ĕçлени вăл çакăн çинчен калать: КПСС хула комитечĕ, нумай предприятисенчи пуçламăш парторганизацисем тата хуçалăх руководителĕсем предприятисем хуçалăх ĕçĕсене тĕплĕн анализ тумаççĕ, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Парти организацийĕсем хуçалăх организацийĕсен ĕçĕсене çителĕксĕр тĕрĕслесе тăраççĕ, рабочисемпе служащисем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Хула хуçалăхне аталантарас ĕçре — çурт-йĕр строительствинче, водопровода, электростанцие реконструкцилесе аслăлатас, хула урамĕсене йĕркене кĕртес ĕçсенче те пысăк çитменлĕхсем пур. Хулара суту-илÿ ĕçне те начар организациленĕ. Халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас ĕçсенче пысăк çитменлĕхсем тĕл пулаççĕ. КПСС хула комитечĕпе хула Совет исполкомĕн çак ыйтусем çине тимлĕрех пăхмалла.

Хулари хуçалăхпа культура строительствинчи пысăк çитменлĕхсем вĕсем, чи малтан, хулари парторганизацире партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсен шайĕ партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсем сÿлĕшĕнче тăманнинчен килеççĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем парти пухăвĕсем—парти организацийĕсен аслă органĕ тата коммунистсене воспитани памалли шкул пулса тăракан парти пухăвĕсем чылай чухне вăхăтра тата кирлĕ шайра ирттернине палăртрĕç. Чылай коммунистсем парти пурнăçне активлă хутшăнмаççĕ. Отчетлă тапхăр хушшинче критикăпа самокритика вăйланчĕ пулсан та, унăн шайĕ парти Уставĕ хушнисене тивĕçтереймест-ха. Хула комитечĕ тата пуçламăш парторганизацисем идеологи ыйтăвĕсем енĕпе, коммунистсене политикăлла воспитани парас енĕпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Халăх хушшинче ирттерекен массăлла-политикăлла ĕç вăхăтран вăхăта кăна, кампани йĕркипе кăна пулса пырать. Уйрăм парторганизацисем профсоюз тата комсомол организацийĕсене ертсе пырассине лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман.

КПСС хула комитечĕ тата унăн пайĕсем пуçламăш парторганизаци секретарĕсене партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçе лайăхлатма кирлĕ чухлĕ пулăшмаççĕ. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче коммунистсем хула комитетне, унăн секретарĕсене, пайсен заведующийĕсене, инструкторсене пуçламăш парторганизацисемпе çителĕксĕр çыхăну тытнăшăн тивĕçлипе критиклерĕç.

Партипе правительство кăларса тăратнă çĕнĕ задачăсем парти организацийĕсен ертсе пырас ĕçĕн шайне малалла ÿстерме хушаççĕ. Партин кашни организацийĕн, кашни коммунистăн активлăхне пур майсемпе те вăйлатни кирлĕ. Вĕсен ĕçĕ совет халăхĕ умне парти кăларса тăратнă историлле задачăсене ăнăçлă татса пама пулăшмалла.

Парти организацийĕсем умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлă татса памалла тăвас тесен, партилле-организацилле тата партилле-политикăлла ĕçсен шайне ÿстермелле, партин çÿлти органĕсем тата пуçламăш организацисенче йышăннă решенисене пурнăçланине тăтăшах тĕрĕслесе тămалла, коммунистсене тата партире тăман кадрсене политикăлла воспитани парас ĕçе, кадрсем суйласа илес, вĕсене вĕрентес ĕçе лайăхлатмалла, критикăпа самокритикăна хăюллăн сарса пымалла. Парти организацийĕсен тивĕçĕ вăл коммунистсене тата мĕнпур ĕçсынисене çитменлĕхсем тĕлĕшĕнчен килĕшÿсĕр пулма, политика тĕлĕшĕнчен сыхăлăхлă пулма воспитани парса вĕрентесси пулать.

Шупашкар хулинчи парторганизаци хăйĕн черетлĕ конференцине Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçнипе кĕтсе илчĕ. Хулари парторганизаци партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене чыслăн пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешет.

Парти конференцийĕн делегачĕсен тивĕçĕ вăл конференци ĕçне активлă хутшăнасси, конференцие идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттересси, КПСС хула комитечĕн, парти, совет, хуçалăх организацийĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене сивĕччĕн те тĕрĕс критиклеесси тата хулари парторганизацин ĕçне лайăхлатма кирлĕ çул-йĕр палăртса хурасси пулать. Çакăнтан орденлĕ Чăваш республикин столицинче хуçалăхпа культура строительстви енĕпе çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасси килет.

„Агитатор блокночĕн“ черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» 17-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă.

Блокнотра Г. Федотовăн «Çĕрулмипе тымарçимĕçсене лайăх пухса кĕртер», Х. Николаевăн «Предприятисене хĕле лайăх хатĕрлер» тата «Тĕнчери ыйтусене мирлĕ майпа татса парассишĕн пыракан кампани» ятлă статьясем пичетленнĕ.

«Агитаци ĕçĕн опычĕнчен» ятлă пайра Шупашкарти пир-авăр комбиначĕнчи парторганизаци секретарĕ П. Рассказов юлташ цехра наглядлă агитацие мĕнле йĕркелени çинчен каласа пани пичетленнĕ.

Агитаторсем валли каласура усă курма бюджетри укçа-тенке ССР Союзĕнче тата капитализмла çĕршывсенче мĕн валли расходланине кăтартса паракан цифрăсемпе фактсем пур.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство делегацийĕ Мускава килсе çитнĕ

Совет Правительстви чĕннипе сентябрĕн 10-мĕшĕнче Мускава Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ килсе çитнĕ. Делегацие Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн Председателĕ Ким Ир Сен ертсе пырать.

Делегацие çаксем кĕреççĕ: Корейăри Ĕçлĕх Партийĕн Центральнăй Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ Пак Ден Ай, Министрсен Кабинечĕн Председателĕн Заместителĕ Тен Ир Лен, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Нам Ир, Государство План Комиссийĕн Председателĕ Тен Дюн Тхак, Чугун çулсен Министрĕ Ким Хэ Иль.

Ярославски вокзалра Делегацие çаксем кĕтсе илнĕ: СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Оборона Министрĕ Н. А. Булганин, СССР Министрĕсен Заместителĕсем А. А. Громыко, С. А. Борисов, Мускав Совет Председателĕ М. А. Яснов, Мускав хулин Коменданчĕ генерал-майор И. С. Колесников, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсем енĕпе ĕçлекен Пайĕн Заведующийĕ Н. Т. Федоренко, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Протокол Пайĕн Заведующийĕ Д. А. Жуков, çавăн пекех СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин ответлă сотрудникĕсем.

Делегацие çавăн пекех çаксем кĕтсе илнĕ: Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Лим Хэ посольствăн ытти членĕсемпе пĕрле, Венгри Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ А. Складан, Китай Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Чжан Вэнь-тянь, Румыни Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. Даля, Польша Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ В. Левиковский, Чехословаки Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Я. Вошаглик, Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посол Р. Аппельт, Албани Халăх Республикин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ М. Прифти, Монголи Халăх Республикин Вăхăтлăх Повереннăйĕ Н. Лувсанчултэм, Болгари Халăх Республикин Вăхăтлăх Повереннăйĕ В. Велков, Демократиллĕ Вьетнам Республикин Вăхăтлăх Повереннăйĕ Нгуэн Дык Куй.

Кĕтсе илнĕ çĕрте хисеплĕ хурал тăратнă тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Вокзала Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе Совет Союзĕн государство ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Делегацие чикĕре СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Протокол Пайĕн Заведующийĕн Заместителĕ В. В. Пастоев кĕтсе илнĕ тата Мускава çитиччен делегаципе пĕрле килнĕ. (ТАСС).

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Министрĕсен Кабинечĕн Председателĕ Ким Ир Сен Мускава килсе çитсен вокзалта тухса каланă сăмах

Хаклă юлташсем,

аслă Совет Союзĕн — мĕнпур çĕршывсенчи халăхсен мирпе хăрушсăрлăхĕн тĕревĕ пулса тăракан çĕршывăн столицине Мускава килсе çитнĕ хыççăн, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ ячĕпе сире, Мускав хулинчи мĕнпур ĕçсынисене, тата аслă Совет Союзĕн мĕнпур халăхне чĕререн вĕçĕ-хĕррисĕр юратса хĕрÿллĕ саламлатăп.

Совет Союзĕн тăванла халăхĕ Корея халăхне Япони империализмĕн нумай çула пынă колониллĕ пусмăрĕнчен хăтарчĕ, кунсăр пуçне тата пирĕн халăха ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç тăвас ĕçре пур енчен те пысăк пулăшу пачĕ. Америка интервенчĕсене тата вĕсем уйăрса лартнă Ли Сын Ман ушкăнне хирĕç Корея халăхĕн виçĕ çул хушши ирĕклĕхшĕн пынă отечественнăй вăрçин йывăр тапхăрĕнче совет халăхĕ, пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕ пурнăçа юратакан халăхсен пуçĕнче тăрса, пысăк пулăшу парса, Корея халăхне хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме, çак кĕрешÿре çĕнтерÿ тума хавхалантарчĕ.

Çавăнпа та пирĕн халăх аслă Совет Союзĕн халăхĕпе тытакан туслăх тата пĕр-пĕриншĕ пĕр шухăшлă пулни Корея халăхĕн мĕнпур çĕнтерĕвĕсен пысăк факторĕсенчен пĕри пулнине тата халĕ те çавăн пек пулнине питех те лайăх ăнланать.

Пирĕн халăх сирĕн çĕршывра совет халăхĕ, Совет Союзĕнчи мухтавлă Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, этемлĕхе ырă та телейлĕ пурнăç кÿрес тесе, пĕтĕм тĕнчере мира тĕреклетес тесе коммунизм строительствин пысăк задачисене пурнăçлас ĕçре тунă чаплă çитĕнÿсене хĕрÿллĕн ырлать тата совет халăхне малалла çитĕнÿсем тума ырă сунать.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Правительство Делегацийĕ Корея халăхне вăрçă юхăнтарса хăварнă халăх хуçалăхне хăвăртрах юсаса аталантарма пулăшу йĕркипе 1 миллиард тенкĕ укçа уйăрса пама решени йышăннăшăн Совет Правительствине чĕререн тав тума, çавăн пекех тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе Аслă Совет Союзĕ хушшинчи экономикăпа культура çыхăнăвĕсене малалла аслăлатмалли тата тĕреклетмелли ыйтусене пăхса тухма Мускава килчĕ.

Эпĕ çакна чĕререн шанса тăратăп: Корейăн Правительство Делегацийĕ Мускава килни Демократиллĕ Корея Халăх Республикипе Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ хушшинчи тăванла туслă хутшăнусене малалла тĕреклетес ĕçе, вăрçă юхăнтарса хăварнă халăх хуçалăхне хăвăртрах юсаса аталантарас тата пирĕн Республикăра халăх демократи стройне малалла тĕреклетес ĕçе, çавăн пекех тата пирĕн Тăван çĕршыва мирлĕ майпа пĕрлештерес, Азире мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетес ĕçе пысăк вăй парĕ.

Сывă пултăр аслă совет халăхĕпе Корея халăхĕ хушшинчи çирĕп туслăх тата пĕр-пĕринпе пĕр шухăшлă пулни!

Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ—пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăхăн шанчăклă тĕревĕ!

Пĕр сменăра 43 норма

ХАРЬКОВ, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Орджоникидзе ячĕпе тăракан трактор заводĕнчи фрезеровщик Николай Лупандин — активлă рационализатор. Вăл ялан ĕç тухăçне ÿстермелли майсем шырать тата хăйĕн конструкцийĕ тăрăх туса хатĕрленĕ тĕрлĕ инструментсемпе усă курать. Вăл пысăк хăвăртлăхпа ĕçлесе пилĕкçуллăх задание тултарнă. Халĕ 1956 çул шучĕпе ĕçлет.

Лупандин ĕçлекен цехри пуринчен те ытларах вăл хумалли ĕç гусеницăллă трактор валли тимĕр модельсем хатĕрлесси пулнă. Халиччен технологи тăрăх кашни комплекта хатĕрлеме 15 смена хушши ĕçлемелле пулнă.

Цех мастерĕпе Ставицкий юлташпа пĕрле ĕçлесе, Н. Лупандин çак модельсене хатĕрлемелли технологи процесне улăштарнă. Халĕ вĕсене тимĕртен тунă формăсем çине арса шăрататççĕ. Çакна пула модельсем туса кăларасси тăхăр хут хăвăртланнă, алюмини расходлассси виçĕ хута яхăн чакнă.

Çĕнĕ технологи йĕркипе ĕçлесе Лупандин юлташ нумаях пулмасть сменăра 32 норма тултарнă. Ĕнерхи пĕрремĕш сменăра вăл çакăнтан та пысăкрах çитĕнÿ тунă. Сакăр сехет хушшинче Н. Лупандин юлташ 20 деталь туса хатĕрленĕ, пĕр кунхи задание 4.360 процент тултарнă.

АТĂЛПА ДОН КАНАЛĔ ВАЛЛИ ÇĔНĔ ТЕПЛОХОДСЕМ

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче Мускаври Çурçĕр портĕнчен пассажирсем илсе çÿрекен «Восход» ятлă çĕнĕ теплоход тухса кайнă. Ăна Мускаври суднăсем тăвакан заводра туса кăларнă. Вăл каналпа Цимлянски тинĕсне Анатри Дон тăрăх çÿрет. Унăн ăшчиккине питĕ илемлĕ тунă. Вăл 250 çын лартса çÿреме пултарать. Ку вăл—Мускаври заводра Атăлпа Дон каналĕ тăрăх çÿреме тунă çакăн пек пăрахутсенчен иккĕмĕшĕ. Малтан туса кăларнă «Рассвет» пăрахут Цимлянски тинĕсре çÿреме пуçланă та ĕнтĕ.

Халĕ «Заря» ятлă виççĕмĕш теплохода туса пĕтереççĕ. Вăл та Атăлпа Дон хушшинчи канал тăрăх çÿрекен пулать.

(ТАСС).

КУБАНЬРЕ РИС ПУÇСА ÇИТНĔ

Кубаньри хирсенче рис пуçса çитнĕ. Красноармейски, Славянски тата Ново-Титаровски районĕсенчи колхозсемпе совхозсем рис вырма тытăннă. Рис хирĕсене комбайнсем илсе тухнă.

Рис — Кубаньре çĕнĕ культура. Риса пĕрремĕш хут 1930 çулта акма пуçланă, 23 çул хушшинче рис акасси питĕ сарăлнă, рис акас тĕлĕшпе Кубань Совет Союзĕн Европа пайĕнче пĕллă вырăн йышăнать. Рис плантацийĕсем ÿсех пыраççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче Курганински районĕнчи колхозсенче рис акмалли системăсене çĕнĕрен йĕркеленĕ. (ТАСС).

ХИСЕП ХĂМИ

Райисполкомсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх, тырпул пухса кĕртес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçланăшăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕн бюровĕ çак колхозсене республикăри Хисеп хăми çине кĕртме йышăннă:

СЕНТĔРВĂРРИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

68. «Коммунизм» колхоз (председателĕ В. Я. Давыдов юлташ, парторганизаци секретарĕ М. Г. Герасимов юлташ).
69. Молотов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Н. В. Васильев юлташ, парторганизаци секретарĕ П. М. Михайлов юлташ).

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

70. Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. Е. Николаев юлташ, парторганизаци секретарĕ И. В. Самаркин юлташ).
71. «Алга» колхоз (председателĕ Г. С. Саляхов юлташ, парторганизаци секретарĕ М. Г. Гибатдинов юлташ).
72. «Красное Сормово» колхоз (председателĕ С. Н. Шарипкин юлташ, парторганизаци секретарĕ А. В. Емельянов юлташ).

КАЛИНИНО РАЙОНĔ ТĂРĂХ

73. «Родина» колхоз (председателĕ Е. И. Иванов юлташ).
74. «Знамя коммунизма» колхоз (председателĕ Ф. А. Антонов юлташ, парторганизаци секретарĕ Г. И. Иванов юлташ).
75. Хрущев ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. С. Куликов юлташ, парторганизаци секретарĕ С. Н. Воробьев юлташ).
76. «Трактор» колхоз (председателĕ Я. Е. Ефремов юлташ, парторганизаци секретарĕ П. В. Васильев юлташ).
77. «Правда» колхоз (председателĕ И. Ф. Кошкин юлташ, парторганизаци секретарĕ Н. П. Ананьев юлташ).
78. Молотов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ А. П. Петров юлташ, парторганизаци секретарĕ И. И. Ежов юлташ).
79. «Комсомолец» колхоз (председателĕ П. Г. Григорьев юлташ, парторганизаци секретарĕ М. А. Андреева юлташ).
80. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. П. Машинов юлташ, парторганизаци секретарĕ П. М. Казанцев юлташ).

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи РАЙОНСЕМ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ПЛАНА СЕНТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă памалли плана тултарнă
Шупашкар	111
Канаш	110
Шăхасан	108
Ишлей	108
Чурачăк	107
Муркаш	107
Комсомольски	106
Елчĕк	105
Тăвай	104
Калинино	102
Чкаловски	101
Çĕрпÿ	101
Вăрмар	101
Сĕнтĕр	100
Етĕрне	100
Красноармейски	99
Куславкка	96
Советски	95
Шăмăршă	95
Вăрнар	93
Пăрачкав	90
Элĕк	90
Сĕнтĕрвăрри	89
Йĕпреç	88
Улатăр	88
Первомайски	86
Октябрьски	84
Хĕрлĕ Чутай	81
Кувакино	80
Çĕмĕрле	73

Ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт вĕçлессишĕн

ПЕРВОМАЙСКИ. Упамсари «Красная поляна» колхоз государствăна тырă памалли обязательствăна августăн 26-мĕшĕнче пурнăçларĕ. Суртрисене пĕтĕмпех вырса пĕтернĕ.

Халĕ колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăх ĕçĕсене кĕске срокра вĕçлессишĕн социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ. Коммунист А. Чемеров юлташ ертсе пыракан иккĕмĕш уй-хир бригади сентябрĕн 2-мĕшĕнче мĕнпур йышши тĕштырăсене çапса пĕтерчĕ. Ытти бригадăсем те авăн çапас ĕçе вĕçлесе пыраççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçлама тăрăшать. Сĕт-çу, çăмарта парса татнă, çитес çулшăн аванс шучĕпе 2.960 литр сĕт панă.

Кăçал Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле колхозри электростанцие ĕçе яма палăртнă. Электростанци çуртне туса пĕтернĕ.

«Правда» колхоз членĕсем те ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлеме тăрăшаççĕ. Колхоз хăйĕн пирвайхи тивĕçне—государствăна тырă памалли плана, районта чи малтан, августăн 25-мĕшĕнче пурнăçларĕ, çуртрисене вырса пĕтерчĕ. Вăрлăх фончĕсене хывса пĕтернĕ хыççăн, колхозниксене аванс шучĕпе кашни ĕçкунĕ çине 1,4 килограмм ыраш валеçсе панă, халĕ тата çуршар килограмм пăрçа параççĕ.

А. ТУКМАКОВ.

Обязательствăсене чыслăн пурнăçларĕç

ÇĔРПÿ. Машина-трактор станцийĕнчи комбайнерсем кăçал, Красноармейски тата Чурачăк районĕсенчи механизаторсемпе социализмла ăмăртăва тухса, кашни самоходнăй комбайнпа 340 гектартан кая мар тырă вырса пуçтарма обязательство илнĕччĕ.

Хăйсен сăмахне пурнăçлассишĕн тăрăшса, комбайнерсем начар мар тĕслĕхсем кăтартрĕç. Уйрăм комбайнерсем вара хăйсен обязательствисене август уйăхĕнчех пурнăçларĕç.

Комбайнер В. Петров кăçал «С-4» комбайнпа Чапаев ячĕпе тăракан тата «Гвардеец» колхозсенче ĕçлерĕ. Вăл 441 гектар, вăтам шутпа куллен 15—18 гектар тырă вырнă. Çавна май асăннă колхозсем кăçал районта тырпул пухса кĕртессине мала тухрĕç, августăн 31-мĕшĕ тĕлне тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене пĕтĕмпех вырса пĕтерчĕç.

«Богатырь» тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсенче ĕçлекен комбайнер И. Портнов та тухăçлă ĕçлерĕ. Вăл «С-4» комбайнпа 417 гектар тырă вырса пуçтарчĕ.

Х. ЛИСИН.

Сиенлĕ лăпкăлăх тыткăнĕнче

СОВЕТСКИ. Куйбышев ячĕпе тăракан колхоз тырпул пухса кĕртес ĕçре кая юлчĕ. Паянхи куна та 45 гектар çинчи тырра вырса пуçтарман. Вăл шутра—14 гектар тулă. Государствăна тырă памалли обязательствăна 50 процент çеç тултарнă. Çак ĕç халĕ те япăх пулса пырать. Вăрлăх хатĕрлеме тытăнман. Сулса пăрахнă пăрçа хăвакарса, çĕрсе кайма пуçланă.

Колхозра ĕç дисциплини япăхнă. Колхозниксем ĕçе иркине 10 сехетре тин тухаççĕ, каçхине хĕвел аниччченех киле таврăнаççĕ. Чылай колхозниксем аякра ĕçлесе çÿреççĕ. Сăнахран, В. Иванов маляр пухса ĕçлесе çÿрет. Анчах колхоз правленийĕ Иванов пирки тивĕçлĕ мера йышăнмасть, ун пек çынсемпе килĕшсе пырать.

Тырпул пухса кĕртес ĕçре МТС та самах пулăшать. МТС-ран килнĕ «МК-1100» молотилка августăн 26-мĕшĕпе сентябрĕн 4-мĕшĕ хушшинче трактор çĕмĕрĕлсе кайнă пирки ахалех ларнă. Трактор бригадин бригадирĕ Е. Шингарева юлташ ăна вăхăтра ĕçе ярассишĕн тăрăшман.

Авăн çапнă çĕрте туртăм вăйĕпе çителĕксĕр усă кураççĕ. Виçĕ бригадăра лашапа çапмалли молотилкăсемпе усă курмаççĕ.

— Пĕрремĕш бригадăра трактор молотилкипа çапса пĕтерсен, теприне пуçлатпăр,—теççĕ колхоз руководителĕсем.

Кун пек шутлани тĕрĕс мар. Пур майсемпе те туллин усă курмалла. Государствăна хăвăртрах тырă парса татассишĕн, ялхуçалăх ĕçĕсене часрах вĕçлессишĕн тăрăшмалла.

И. ЛУКИН.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1953 сулхи бюджечĕ çинчен йышăннă

З А К О Н

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1 статья. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çирĕплетме тăратнă бюджета — Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1953 сулхи бюджетне, Бюджет комиссийĕн докладĕ тăрăх кĕртнĕ улшăнусене шута илсе, çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес: тупăшсем енĕпе 349.040,2 пин тенкĕ, расходсем енĕпе 348.735,2 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 305 пин тенкĕ ытларах пулмалла тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 сулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 14.218 пин тенкĕ пулмалла.

2 статья. Чăваш АССР-ĕн 1953 сулхи бюджечĕ тăрăх халăх хуçалăхне 97.360,2 пин тенкĕ, кунсăр пуçне, предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен хăйсен укçинчен 9.248 пин тенкĕ, çапла вара пĕтĕмпе 46.608,2 пин тенкĕ уйăрса памалла, çакă вăл, 1952 сулхипе танлаштарсан, 10.488,0 пин тенкĕ ытларах пулать.

3 статья. Чăваш АССР-ĕн 1952 сулхи бюджетĕнчен социальнă-культурăллă ĕçсем валли пĕтĕмпе 280.202 пин тенкĕ уйăрса памалла тăвас, çакă вăл, 1952 сулхипе танлаштарсан, 12,051,0 пин тенкĕ ытларах пулать.

Социально-культурăллă уйрăм ĕçсем валли çакăн чухлĕ расходламалла тăвас:

а) çутĕçпе культура енĕпе—пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли, вăтам шкулсем, техникумсем тата ытти вăтам специальнăй шкулсем, наукăпа тĕпчес учрежденийĕсем, курссем тата рабочисен, колхозниксен, инженерсемпе техниксен квалификацине ÿстермелли ытти ĕçсем валли, библиотекăсем, культура сурчĕсем, театрсем, пичет тата çутĕçпе культура енĕпе ытти ĕçсем валли—пĕтĕмпе 192.168,0 пин тенкĕ, çакă вăл 1952 сулхинчен 2.672,0 пин тенкĕ ытларах пулать;

б) сывлăха сыхлас ĕç енĕпе — больницăсем, диспансерсем, ача суратмалли суртсем, ача яслисем, санаторисем тата халăха медицина пулăшăвĕ парас енĕпе ĕçлекен ытти учрежденисем валли, спортпа физкультура ĕçĕсем валли—пĕтĕмпе 84.896,0 пин тенкĕ, çакă вăл 1952 сулхинчен 0.352 пин тенкĕ ытларах пулать.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе малалла лайăхлатас, больницăсене, поликлиникăсене тата ытти медицина учрежденийĕсене медицина оборудованийĕ, кăпе-йĕм тарашĕ тата хуçалăх инвентарĕ парса тăрас ĕçе лайăхлатас шутпа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулта сывлăха сыхлас ĕç валли çĕнĕрен хушса 1.497,0 пин тенкĕ уйăрса памалла тунине çирĕплетес, çав укçа чирлĕ сынсене паракан апата лайăхлатма, медикаментсем туянма кирлĕ расходсене ÿстерме, больницăсем валли кăпе-йĕм таврашĕ, медицинăпа хуçалăх инвентарĕ туянма, сывлăх учрежденийĕсене тĕпрен юсама яймалла;

в) социальнăй обеспечени енĕпе—вăрçă инвалидĕсемпе вĕсен çемйисене пенсипе пособи укçи тÿлеме, инвалидсен суртсене тытса тăма тата ытти пенсисем валли — пĕтĕмпе 3.138 пин тенкĕ.

4 статья. Чăваш АССР-ĕн 1953 сулхи республика бюджетне тупăшсем енĕпе 117.711,7 пин тенкĕ тата расходсем енĕпе 117.406,7 пин тенкĕ çирĕплетес, тупăшсем расходсенчен 305,0 пин тенкĕ ытларах пулмалла, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 сулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1.068,0 пин тенкĕ пулмалла.

5 статья. Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен 1953 сулхи бюджечĕсене çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

Районсемпе хуласен ячĕсем	Тупăшсем тата расходсем	Кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 сулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ
	(пиншер тенкĕпе)	
1. Улатăр	7769,9	380,0
2. Элĕк	6339,6	330,0
3. Вăрнар	8725,0	429,0
4. Йĕпреç	8895,2	430,0
5. Ишлей	5743,7	300,0
6. Калинино	6274,5	343,0
7. Канаш	7022,1	365,0
8. Куславкка	9603,8	490,0
9. Комсомольски	7424,6	386,0
10. Красноармейски	6812,3	350,0
11. Хĕрлĕ Чутай	8210,3	445,0
12. Кувакино	4623,7	229,0
13. Сĕнтĕрвăрри	7932,9	376,0
14. Муркаш	5384,1	272,0
15. Октябрьски	6496,8	335,0
16. Первомайски	6965,9	351,0
17. Пăрачкав	7860,6	305,0
18. Советски	5720,3	300,0
19. Сĕнтăр	6072,9	315,0
20. Вăрмар	9695,4	500,0
21. Сĕрпÿ	9162,8	453,0
22. Шупашкар	6891,7	363,0
23. Чкаловски	7359,7	394,0
24. Чурачăк	6050,1	317,0
25. Шăмăршă	5992,9	320,0
26. Шăхасан	6754,8	350,0
27. Çĕмĕрле	12829,1	602,0
28. Етĕрне	7786,5	389,0
29. Елчĕк	8677,1	476,0
30. Тăвай	6751,2	348,0
31. Улатăр хули	13927,6	290,0
32. Канаш хули	7098,2	150,0
33. Шупашкар хули	23719,9	480,0

6 статья. 1953 çулта Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен бюджечĕсене халăхран тупăш тăрăх илекен налогран, ялхуçалăх налогĕнчен, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал ачаллă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран, государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухăнакан укçаран, вăрман тупăшĕнчен, оборотран илекен налог укçинчен çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас (процентпа):

Районсемпе хуласен ячĕсем	Халăхран тупăш тăрăх илекен налогран	Ялхуçалăх налогĕнчен	ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал ачаллă гражданĕсенчен илекен налогран	Государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухăнакан укçаран	Вăрман тупăшĕнчен	Оборотран илекен налогран
1. Улатăр	30	20	60	50	16	5,9
2. Элĕк	100	80	100	66	—	100
3. Вăрнар	40	20	62	60	50	37,3
4. Йĕпреç	40	20	60	60	50	39,3
5. Ишлей	40	24	64	60	—	100
6. Калинино	100	59	99	65	—	100
7. Канаш	50	20	70	50	50	1,5
8. Куславкка	40	25	60	50	—	76,0
9. Комсомольски	100	80	100	78	—	100
10. Красноармейски	80	68	100	60	50	100
11. Хĕрлĕ Чутай	80	46	80	50	80	100
12. Кувакино	100	70	100	51	—	100
13. Сĕнтĕрвăрри	40	20	80	50	40	46,8
14. Муркаш	82	80	100	59	—	100
15. Октябрьски	100	80	100	80	—	100
16. Первомайски	100	81	100	61	—	100
17. Пăрачкав	40	20	80	50	50	83,4
18. Советски	100	76	100	60	—	100
19. Сĕнтăр	41	38	100	60	—	100
20. Вăрмар	100	30	100	60	—	100
21. Сĕрпÿ	40	29	80	60	54	43,1
22. Шупашкар	82	46	80	61	40	100
23. Чкаловски	100	80	100	80	—	100
24. Чурачăк	100	80	100	80	—	100
25. Шăмăршă	50	49	70	50	50	100
26. Шăхасан	100	81	100	80	—	100
27. Çĕмĕрле	39	26	61	49	39	6,7
28. Етĕрне	41	20	61	50	41	28,4
29. Елчĕк	50	85	59	50	—	100
30. Тăвай	100	70	100	80	—	100
31. Улатăр хули	30	25	60	46	—	13,3
32. Канаш хули	10	25	20	10	—	0,6
33. Шупашкар хули	10	8	19	20	—	1,2

7 статья. 1953 çулта районсен бюджечĕсене çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас:

а) единоличниксен хуçалăхĕсенчен лашасемшĕн илекен государство налогĕнчен . . 50 процент

б) колхозсенчен тупăш тăрăх илекен налогран . . . . . . 35 процент

в) машина-трактор станцийĕсен тупăшĕсенчен . . . . . 40 процент.

8 статья. Чăваш АССР республика бюджетне хуласемпе районсенче пухăнакан укçаран çакăн чухлĕ илмелле тăвас: Шупашкар хулинче халăхран тупăш тăрăх налог илнипе пухăнакан укçаран 15,2 процент, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал ачаллă çемьеллĕ гражданĕсенчен налог илнипе пухăннă укçаран 24,2 процент, государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухăнакан укçаран 21,6 процент, оборотран налог илнипе пухăнакан укçаран 56,6 процент, Шупашкар районĕнче вăрман тупăшĕнчен пухăнакан укçаран 7,7 процент, республикăри мĕнпур районсенче единоличниксен хуçалăхĕсенчен лашасемшĕн налог илнипе пухăнакан укçаран 25 процент.

9 статья. Чăваш АССР-ĕн 1952 сулхи бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета тупăшсем 333.108,0 пин тенкĕ, расходсем 332.948,0 пин тенкĕ, бюджетри укçа-тенкĕн 1953 сулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 14.280 пин тенкĕ пулнипе çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 сулхи сентябрĕн 8-мĕшĕ.

Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 93-мĕш статьине улшăнусем кĕртесси çинчен йышăннă

З А К О Н

Совет Союзĕн Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съесчĕ парти атне улăштарнă май тата РСФСР Конституцийĕн 130-мĕш статьи тăрăх, Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 93-мĕш статьине улшăнусем кĕртсе, ку статьяна çакăн пек сырса хурас:

«93 статья. Ĕçхалăхĕсен интересĕсене хÿтĕлесе тата халăх массисен организациллĕ пултарулăхне политикăпа активлăхне ÿстерес шутпа Чăваш АССР гражданĕсен общество организацийĕсене: профессиллĕ союзсене, кооперативла пĕрлешÿсене, çамрăксен организацийĕсене, спортпа оборона организацийĕсене, культура, техника тата ăслăлăх обществисене пĕрлешме право панă, рабочи класĕн, ĕçхрестченĕсен тата ĕç интеллигенцийĕн речĕсенчи чи активлă та чи ăнланулă гражданĕсем вара—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешеççĕ, вăл парти ĕçхалăхĕсен коммунизм обществине тăвассишĕн пыракан кĕрешĕвĕнче вĕсен малти отрячĕ пулса тăрать, ĕçхалăхĕсен мĕнпур организацийĕсене—общественнисене те, государстварисене те ертсе пыракан чĕмĕр пулса тăрать».

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1953 сулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕМ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННА УКАЗСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать: Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР министрĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен йышăннă çак Указсене çирĕплетес:

Чăваш АССР Шалти ĕçсен министрĕ пулма—Николай Дмитриевич Вахарева,

Чăваш АССР Ялхуçалăхне хатĕрлес министрĕ пулма—Григорий Алексеевич Мартынова,

Чăваш АССР Культура министрĕ пулма—Петр Капитонович Капитонова,

Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ пулма—Николай Николаевич Боброва.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 сулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ П. А. РУНГШ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ СУМĔНЧИ СУЛ-ЙĔРПЕ ТРАНСПОРТ ХУÇАЛĂХĔН УПРАВЛЕНИ НАЧАЛЬНИКĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННА УКАЗА ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Петр Андреевич Рунгш юлташа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ сумĕнчи Сул-йĕрпе транспорт хуçалăхĕн управленин начальникĕ пулма уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 сулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

СЕССИ ДНЕВНИКĔ

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче пулнă юлашки лару

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш, юлашки ларăвĕ уçăлчĕ. Кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйту тăрăх—Чăваш АССР-ĕнче халăха вĕрентес ĕç çитĕнĕвĕсем çинчен тата ку ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен тунă доклад тăрăх — прениссем малалла пычĕç. Чи малтан В. Я. Чистопольский депутат сăмах илчĕ. Вăл совет шкулĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

Оратор Улатăр хулинчи шкулсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче ученикĕсенчен лайăх-рах ĕçлеççĕ тесе палăртать. Шкулсенчи экзаменсенче вĕренекенсен 40 проценчĕ, вунăмĕш классенче вĕренекенсен 70 проценчĕ отлично тата лайăх паллăсем илнĕ. Çапах та хулари шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрес пыни çителĕклĕ мар-ха. Çутĕç министерстви, çакăн пекех хуласемпе районсенчи çутĕç пайĕсем халăха вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене асăрхамаççĕ. Вĕсем вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ пысăк пулнипе, вĕренекенсене пĕр класран тепĕр çула хăварнипе, дисциплина çителĕксĕр пулнипе килĕшсе пурăнаççĕ. Çав çитменлĕхсем султан-çул пулса пыраççĕ.

Чистопольский депутат хулари шкулсенче çĕнĕ вĕренÿ çулне йĕркеллĕ пуçланине палăртать. Пур шкулсен çурчĕсене те юсанă, вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ. Анчах хулари шкулсенче физикăпа математика преподавателĕсем çитмеççĕ.

А. В. Платонова депутат шкулсенче ачасене вĕрентес ĕçе татăклăн лайăхлатма кирли çинчен тата вырăнти Советсен шкулсемшĕн тимлĕрех тăрăшмалли çинчен каларĕ.

Чăваш АССР Çутĕç министрĕ А. М. Токарев юлташ КПСС XIX-мĕш съесчĕн директивисем тăрăх вăтам шкулсенче вĕрентессине сарса пыма тата пурне те вăтам шкулсенче вĕрентме кирлĕ условисем хатĕрлеме палăртнине аса илтерет.

Çак кăтартăва пурнăçлас тĕлĕшпе республикăра хăшпĕр ÿсĕмсем тунă. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче VIII—X-мĕш классенче вĕренинисен хисепĕ, унченхипе танлаштарсан, тăватă пин сын чухлĕ ÿснĕ. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче вăтам шкулсем 7 уçнă. VIII-мĕш классене 13 пин сынна яхăн вĕренме илнĕ, ку вăл çиччĕмĕш классенче вĕренсе тухнисен 60 проценчĕ чухлĕ пулать.

Шупашкар хулинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухнисен 95 проценчĕ вăтам шкулсен VIII-мĕш классĕсене е специалистсем хатĕрлекен шкулсене кĕнĕ. Çитес вĕренÿ çулĕнче Чăваш республикин столицинче пурне те вунă çул вĕрентме тытăнмалла пулать.

Çутĕç министерстви республикăри ытти хуласенче тата ялсенче те пурне те вунă çул вĕрентмелле тăвас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса пырать. Çутĕç пайĕсен вăтам шкулсен ĕçĕ çине тимлĕрех пăхмалла, ачасем пурте аслăрах классенче вĕренччĕр тесе тăрăшмалла.

Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарас тĕлĕшпе иртнĕ вĕренÿ çулĕнче çителĕксĕр ĕçленĕ. Çавна пула Пăрачкав, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Ишлей районĕсенче нумай ачасем шкул тулашне тăрса юлнă. Çав йăнăшсем кăçал та пулса пыраççĕ. Нирĕн республикăра сентябрĕн 1-мĕшĕнче шкул çулне çитнĕ чылай ачасем шкула пыман. Çутĕç пайĕсемпе учительсем çав ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарма тăрăшаççĕ.

Хăшпĕр район Совечĕсен исполкомĕсем пурне те хут вĕрентес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Улатăр, Вăрнар тата ытти хăшпĕр районсенче нумай ачасем шкула пыман. Ку вăл район Совечĕсен исполкомĕсем ачасене тĕрĕс шута илменнинчен, вĕсене вĕренĕве хутшăнтарма кирлĕ ĕçсене туманнинчен килнĕ.

Токарев юлташ республикăри чылай шкулсен коллективĕсем вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче çитĕнÿсем тунине палăртать. Шупашкар хулинчи, Кувакино, Муркаш, Шупашкар, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи нумай шкулсенче ачасем вĕренÿре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Анчах вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Первомайски, Шăхасан, Етĕрне районĕсенче тата ытти хăшпĕр районсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен шучĕ чакмарĕ, ÿсрĕ. Красноармейски районĕнчи Именкассинчи вăтам шкулта, Шăхасанти вăтам шкулта, Советски районĕнчи вăтам шкулта тата ытти хăшпĕр шкулсенче кашни виççĕ ачаран пĕри вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасть.

Шкулсенче ачасене вĕрентес ĕç кирлĕ пек пулса пыманнине совет сынничем килĕшме пултараймаççĕ. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен йышĕ хăшпĕр учительсем çителĕксĕр ĕçленĕ пирки пысăк.

Çутĕç органĕсен учитель начар ĕçленипе килĕшме юрамасть. Кашни учителех вĕренекенсене тĕплĕн вĕрентме, нумайрах пĕлÿ пама хушмалла, унтан ыйтăрах ыйтмалла.

Çутĕç пайĕсемпе Чăваш АССР Çутĕç министерстви шкулсене тата учительсене начар ертсе пыраççĕ.

Çутĕç пайĕсем кашни шкула конкретлă ертсе пыма, кая юлнă шкулсене уйрăмах нумай пулăшма, ачасене вĕрентес ĕç мĕнле пынине тĕплĕн тĕрĕслеме, малта пыракан шкулсемпе учительсен опытне пĕрмаях тĕпчесе вĕренме тата анлăн сарма тивĕçлĕ. Учительсенчен хăйсене шанса панă ĕçе лайăх туса пыма хытă ыйтмалла, шкулсем начар ĕçленипе килĕшсе тăмалла мар, вĕсен ĕçĕсене лайăхлатма тăрăшмалла. Пур çутĕç органĕсен ĕçне те тĕпчесе вĕренме тата вĕсене ĕçре пулăшса пыма Çутĕç министерстви хытă тăрăшĕ.

О. П. Русина депутат Улатăр районĕнчи шкулсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем çинчен каласа пачĕ. Шкулсен ĕçĕнче çавăн пек çитменлĕхсем пулнăшăн район Совечĕ айăплă, тет вăл. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче вырăнти Советсенчен хăшпĕрисем шкул çулне çитнĕ ачасене шута илес ĕçе енчен тунă. Çавна пула вĕренме тивĕçлĕ ачасенчен чылайăшĕ шкула çÿремен.

Унтан Русина депутат районти шкулсенче учительсем çитменни çинчен каларĕ. Математика вĕрентме аслă шкултан вĕренсе тухнă виçĕ преподаватель тата учительски институтран вĕренсе тухнă икĕ преподаватель халĕ те çитмест.

— Коммунистсен партийĕ, правительство тата пирĕн халăх совет учителĕн ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ,—тет А. М. Шалфеева юлташ.—Партипе правительство халăха вĕрентме тăван атте пек тăрăшнипе хавхаланса, Чăваш республикинчи учительсен пысăк пайĕ ачасене вĕрентес тĕлĕшпе тÿрĕ хăмалла тăрăшса ĕçлет.

Пирĕн республикăра çĕршер учительсем педагогика ĕçне ăста пĕлекен мастерсем пулса тăчĕç. Вĕсем ачасене кашни сулах лайăх вĕрентеççĕ, çирĕп пĕлÿ параççĕ, вĕсем вĕрентекен ачасемпе çамрăксем хушшинче вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисем çук. Халăха вĕрентес ĕçре çитĕнÿсем тунăшăн икĕ пин ытла учителе орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Анчах республикăри шкулсен ĕçĕнче, халăха вĕрентес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Кунта шкулсен ĕçĕнчи уйрăм çитменлĕхсемпе кăлтăксем çинчен мар, республикăра халăха вĕрентес ĕç питех те çителĕксĕр пулса пыни çинчен сăмах пырать. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, Çутĕç министерстви тата вырăнти Советсем çак ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туми халĕ те тытăнман-ха.

Республикăри шкулсен тĕп çитменлĕхĕ вĕсенчен чылайăшĕ вĕренекенсене программăсенче палăртнă таран çирĕп пĕлÿ памасси пулать. Çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем нумайăшĕ пĕлĕвĕсем çителĕксĕр пулнă пирки, аслă шкулсене кĕреймеççĕ, пĕр-пĕр ĕçе кăна те начар хатĕрленнĕ.

Шкул ачисем вĕренÿре кирлĕ пек ĕлкĕрсе пырайманнин сăлтавĕ учительсенчен чылайăшĕ уроксене иртерме начар хатĕрленни пулать. Урок пахалăхĕшĕн кĕрешмен пирки ачасене вĕрентес ĕç лайăх пулса пыраймасть, çакă вара çамрăк ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕçшĕн сиенлĕ.

Нумай шкулсенче вĕренÿре кая юлакан ачасене пулăшассине начар йĕркелене, учительсем ачасен пĕлĕвĕнчи тата хăнăхăвĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ ĕçсене тумаççĕ.

Юлашкинчен Шалфеева юлташ çапла каларĕ: Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, хула, район Совечĕсен исполкомĕсем, Çутĕç министерстви тата унăн вырăнти органĕсем, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем активлă пулăшнипе, республикăра халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатма тивĕçлĕ ĕçсем тăвĕç.

Чкаловски, Красноармейски тата Елчĕк районĕсенчи шкулсен ĕçĕсем çинчен, вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен Р. Я. Ахметова депутат, Красноармейски райисполкомĕн председателĕ Г. Ф. Федоров юлташ, Елчĕк райисполкомĕн председателĕ А. С. Степанов юлташ каласа пачĕç.

Прениссем вĕçленнĕ хыççăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председатель заместителĕ М. А. Андреев депутат юлашки сăмах каларĕ.

Верховнăй Совет республикăра халăха вĕрентес ĕç мĕнле тăни тата ку ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен постановлени йышăнчĕ.

Унтан Верховнăй Совет кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйтăва — Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ сессисем хушшинчи тапхăрта йышăннă Указсене çирĕплетес ыйтăва пăхса тухма тытăнчĕ. Ку ыйтупа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. И. Измайлов депутат доклад туса пачĕ. Чăваш АССР Шалти ĕçсен министрĕ пулма Н. Д. Вахарева, Чăваш АССР Ялхуçалăхне хатĕрлев министрĕ пулма Г. А. Мартынова, Чăваш АССР Культура министрĕ пулма П. К. Капитонова, Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ пулма Н. Н. Боброва, Сул-йĕрпе транспорт хуçалăхĕн управлени начальникĕ пулма П. А. Рунгша уйăрса лартни çинчен Президиум йышăннă Указсене Верховнăй Совет пурте пĕр сасăпа пулнипе çирĕплетрĕ.

А. И. Измайлов депутат Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съесчĕ партие çĕнĕ ят панипе тунă май тата РСФСР Конституцийĕн 130-мĕш статьипе килĕшÿллĕ тума Чăваш АССР Конституцийĕн 93-мĕш статьине улшăнусем кĕртме сĕнчĕ. Унăн сĕнĕвне Верховнăй Совет пурте пĕр сасăпа пулнипе йышăнчĕ.

Унтан лару председателĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ хупăнни çинчен пĕлтерчĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи бюджечĕ çинчен йышăннă

З А К О Н

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1 статья. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çирĕплетме тăратнă бюджета — Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин 1953 çулхи бюджетне, Бюджет комиссийĕн докладĕ тăрăх кĕртнĕ улшăнусене шута илсе, çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес: тупăшсем енĕпе 349.040,8 пин тенкĕ, расходсем енĕпе 348.735,2 пин тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 305 пин тенкĕ ытларах пулмалла тата, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 14.218 пин тенкĕ пулмалла.

2 статья. Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ тăрăх халăх хуçалăхне 37.360,2 пин тенкĕ, кунсăр пуçне, предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен хăйсен укçинчен 9.248 пин тенкĕ, çапла вара пĕтĕмпе 46.608,2 пин тенкĕ уйăрса памалла, çакă вăл, 1952 çулхипе танлаштарсан, 10.488,0 пин тенкĕ ытларах пулать.

3 статья. Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетĕнчен социальнă-культурăллă ĕçсем валли пĕтĕмпе 280.202 пин тенкĕ уйăрса памалла тăвас, çакă вăл, 1952 çулхипе танлаштарсан, 12,051,0 пин тенкĕ ытларах пулать.

Социально-культурăллă уйрăм ĕçсем валли çакăн чухлĕ расходламалла тăвас:

а) çутĕçпе культура енĕпе—пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли, вăтам шкулсем, техникумсем тата ытти вăтам специальнăй шкулсем, наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем, курссем тата рабочисен, колхозниксен, инженерсемпе техниксен квалификацине ÿстермелли ытти ĕçсем валли, библиотекăсем, культура çуртĕсем, театрсем, пичет тата çутĕçпе культура енĕпе ытти ĕçсем валли—пĕтĕмпе 192.168,0 пин тенкĕ, çакă вăл 1952 çулхинчен 2.672,0 пин тенкĕ ытларах пулать;

б) сывлăха сыхлас ĕç вăйĕпе — больницăсем, диспансерсем, ача суратмалли çуртсем, ача яслисем, санаторисем тата халăха медицина пулăшăвĕ парас енĕпе ĕçлекен ытти учрежденисем валли, спортпа физкультура ĕçĕсем валли—пĕтĕмпе 84.896,0 пин тенкĕ, çакă вăл 1952 çулхинчен 9.352 пин тенкĕ ытларах пулать.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе малалла лайăхлатас, больницăсене, поликлиникăсене тата ытти медицина учрежденийĕсене медицина оборудованийĕ, кăпе-йĕм тавраш тата хуçалăх инвентарĕ парса тăрас ĕçе лайăхлатас шутпа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулта сывлăха сыхлас ĕç валли çĕнĕрен хушса 1.497,0 пин тенкĕ уйăрса памалла тунине çирĕплетес, çав укçа чирлĕ çынсене паракан апата лайăхлатма, медикаментсем туянма кирлĕ расходсене ÿстерме, больницăсем валли кăпе-йĕм тавраш, медицинăпа хуçалăх инвентарĕ туянма, сывлăх учрежденийĕсене тĕпрен юсама яймалла;

в) социальнăй обеспечени енĕпе—вăрçă инвалидĕсемпе вĕсен çемйисене пенсипе пособи укçи тÿлеме, инвалидсен çурчĕсене тытса тăма тата ытти пенсисем валли — пĕтĕмпе 3.138 пин тенкĕ.

4 статья. Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи республика бюджетне тупăшсем енĕпе 117.711,7 пин тенкĕ тата расходсем енĕпе 117.406,7 пин тенкĕ çирĕплетес, тупăшсем расходсенчен 305,0 пин тенкĕ ытларах пулмалла, кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 1.063,0 пин тенкĕ пулмалла.

5 статья. Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен 1953 çулхи бюджечĕсене çакăн чухлĕ пулмалла туса çирĕплетес:

Районсемпе хуласен ячĕсем	Тупăшсем тата расходсем	Кунсăр пуçне, бюджетри укçа-тенкĕн 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ
	(пиншер тенкĕпе)	
1. Улатăр	7769,9	380,0
2. Элĕк	6339,6	330,0
3. Вăрнар	8725,0	429,0
4. Йĕпреç	8895,2	430,0
5. Иншей	5743,7	300,0
6. Калинино	6274,5	343,0
7. Канаш	7022,1	365,0
8. Куславкка	9603,8	490,0
9. Комсомольски	7424,6	386,0
10. Красноармейски	6812,3	350,0
11. Хĕрлĕ Чутай	8210,3	445,0
12. Кувакино	4623,7	229,0
13. Сĕнтĕрвăрри	7932,9	376,0
14. Муркаш	5384,1	272,0
15. Октябрьски	6496,8	335,0
16. Первомайски	6965,9	351,0
17. Пăрачкав	7860,6	805,0
18. Советски	5720,3	300,0
19. Сĕнтăр	6072,9	315,0
20. Вăрмар	9695,4	500,0
21. Çĕрпÿ	9162,8	453,0
22. Шупашкар	6891,7	363,0
23. Чкаловски	7359,7	394,0
24. Чурачăк	6050,1	317,0
25. Шăмăршă	5992,9	320,0
26. Шăхасан	6754,8	350,0
27. Çĕмĕрле	12829,1	602,0
28. Етĕрне	7786,5	389,0
29. Елчĕк	8677,1	476,0
30. Тăвай	6751,2	348,0
31. Улатăр хули	13927,6	290,0
32. Канаш хули	7098,2	150,0
33. Шупашкар хули	23719,9	480,0

6 статья. 1953 çулта Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен бюджечĕсене халăхран тупăш тăрăх илекен налогран, ялхуçалăх налогĕнчен, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран, государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухăнакан укçаран, вăрман тупăшĕнчен, оборотран илекен налог укçинчен çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас (процентпа):

Районсемпе хуласен ячĕсем	Халăхран тупăш тăрăх илекен налогран	Ялхуçалăх налогĕнчен	ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен илекен налогран	Государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухăнакан укçаран	Вăрман тупăшĕнчен	Оборотран илекен налогран
1. Улатăр	30	20	60	50	16	5,9
2. Элĕк	100	80	100	66	—	100
3. Вăрнар	40	20	62	60	50	37,3
4. Йĕпреç	40	20	60	60	50	39,3
5. Иншей	40	34	64	60	—	100
6. Калинино	100	59	99	65	—	100
7. Канаш	50	20	70	50	50	1,5
8. Куславкка	40	25	60	50	—	76,0
9. Комсомольски	100	80	100	78	—	100
10. Красноармейски	80	68	100	60	50	100
11. Хĕрлĕ Чутай	80	46	80	50	80	100
12. Кувакино	100	70	100	51	—	100
13. Сĕнтĕрвăрри	40	20	80	50	40	40,8
14. Муркаш	82	80	100	59	—	100
15. Октябрьски	100	80	100	80	—	100
16. Первомайски	100	81	100	61	—	100
17. Пăрачкав	40	20	80	50	50	83,4
18. Советски	100	76	100	60	—	100
19. Сĕнтăр	41	38	100	60	—	100
20. Вăрмар	100	30	100	60	—	100
21. Çĕрпÿ	40	29	80	60	54	43,1
22. Шупашкар	82	46	80	61	40	100
23. Чкаловски	100	80	100	80	—	100
24. Чурачăк	100	80	100	80	—	100
25. Шăмăршă	50	49	70	50	50	100
26. Шăхасан	100	81	100	80	—	100
27. Çĕмĕрле	39	26	61	49	39	6,7
28. Етĕрне	41	20	61	50	41	28,4
29. Елчĕк	50	85	59	50	—	100
30. Тăвай	100	70	100	80	—	100
31. Улатăр хули	30	25	60	46	—	13,3
32. Канаш хули	10	25	20	10	—	0,6
33. Шупашкар хули	10	8	19	20	—	1,2

7 статья. 1953 çулта районсен бюджечĕсене çакăн чухлĕ уйăрса памалла тăвас:

а) единоличниксен хуçалăхĕсенчен лашасемшĕн илекен государство налогĕнчен . . 50 процент

б) колхозсенчен тупăш тăрăх илекен налогран . . . . . . 35 процент

в) машина-трактор станцийĕсен тупăшĕсенчен . . . . . 40 процент.

8 статья. Чăваш АССР республика бюджетне хуласемпе районсенче пухăнакан укçаран çакăн чухлĕ илмелле тăвас: Шупашкар хулинче халăхран тупăш тăрăх налог илнипе пухăнакан укçаран 15,2 процент, ССР Союзĕн мăшăрланман, пĕччен пурăнакан тата сахал йышлă çемьеллĕ гражданĕсенчен налог илнипе пухăннă укçаран 24,2 процент, государство заемĕсене подпискăпа сарнинчен пухăнакан укçаран 21,6 процент, оборотран налог илнипе пухăнакан укçаран 56,6 процент, Шупашкар районĕнче вăрман тупăшĕнчен пухăнакан укçаран 7,7 процент, республикăри мĕнпур районсенче единоличниксен хуçалăхĕсенчен лашасемшĕн налог илнипе пухăнакан укçаран 25 процент.

9 статья. Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен калакан отчета тупăшсем 333.108,0 пин тенкĕ, расходсем 332.948,0 пин тенкĕ, бюджетри укça-тенкĕн 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тепĕр çула куçакан юлашкийĕ 14.280 пин тенкĕ пулнипе çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи сентябрĕн 8-мĕшĕ.

Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 93-мĕш статьине улшăнусем кĕртесси çинчен йышăннă

З А К О Н

Совет Союзĕн Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ парти ятне улăштарнă май тата РСФСР Конституцийĕн 130-мĕш статьи тăрăх, Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Конституцийĕн (Тĕп Законĕн) 93-мĕш статьине улшăнусем кĕртес, ку статьяна çакăн пек çырса хурас:

«93 статья. Ĕçхалăхĕн интересĕсемпе хăйĕн тата халăх массисен организациллĕ пултарулăхне политикăлла аталантарас тĕллевпе Чăваш АССР гражданĕсен общественнăй организацисене: профессиллĕ союзсене, кооперативла пĕрлешÿсене, çамрăксен организацийĕсене, спортпа оборона организацийĕсене, культура, техника тата ăслăлăх обществисене пĕрлешме право панă, рабочи класăн, ĕçхалăхĕн хресченĕсен тата ĕç интеллигенцийĕн ретĕсенчи чи активлă та чи ăнлануллă гражданисем вара — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине хăйсен пĕрлешÿне пĕрлешеççĕ, вăл парти ĕçхалăхĕн коммунизм обществи тăвассишĕн пыракан кĕрешĕвĕнче вĕсен малти отрячĕ пулса тăрать, ĕçхалăхĕн мĕнпур организацийĕсенĕ — общественнăйĕсене те, государстволлисене те ертсе пыракан чăмăр пулса тăрать».

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1953 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕМ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННА УКАЗСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать: Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР министрĕсем пулма уйăрса лартасси çинчен йышăннă çак Указсене çирĕплетес:

Чăваш АССР Шалти ĕçсен министрĕ пулма—Николай Дмитриевич Вакарова,

Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕ пулма—Григорий Алексеевич Мартынова,

Чăваш АССР Культура министрĕ пулма—Петр Капитонович Капитонова,

Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ пулма—Николай Николаевич Боброва.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ П. А. РУНГШ ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ ÇУМĕНЧИ ÇУЛ-ÇЕРПЕ ТРАНСПОРТ ХУÇАЛĂХĔН УПРАВЛЕНИ НАЧАЛЬНИКĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННĂ УКАЗА ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикин Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Петр Андреевич Рунгш юлташа Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Çул-çĕрпе транспорт хуçалăхĕн управленин начальникĕ пулма уйăрса лартасси çинчен йышăннă Указа çирĕплетес.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1953 çулхи сентябрĕн 9-мĕшĕ.

СЕССИ ДНЕВНИКĔ

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче пулнă юлашки лару

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш, юлашки ларăвĕ уçăлчĕ. Кун йĕркинчи малтанхи ыйту тăрăх—Чăваш АССР-ĕнче халăха вĕрентес ĕç аталанăвĕ тата ку ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен тунă доклад тăрăх — прениллесем малалла пычĕç. Чи малтан В. Я. Чистопольский депутат сăмах илчĕ. Вăл совет шкулĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ.

Оратор Улатăр хулинчи шкулсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче ученниксенчен лайăх-рах ĕçленине палăртать. Шкулсенчи экзаменсенче вĕренекенсен 40 проценчĕ, вунăмĕш классенче вĕренекенсен 70 проценчĕ отличнопа тата лайăх паллăсем илнĕ. Çапах та хулари шкулсенче вĕренÿре ĕлкĕрес пыни çителĕксĕр-ха. Çутĕç министерстви, çавăн пекех хуласемпе районсенчи çутĕç пайĕсем халăха вĕрентес ĕçри çитменлĕхсене асăрхамаççĕ. Вĕсем вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ пысăк пулнипе, вĕренекенсене пĕр класран тепĕр çула хăварнипе, дисциплина çителĕксĕр пулнипе килĕшсе пурăнаççĕ. Çав çитменлĕхсем çултан-çул пулса пыраççĕ.

Чистопольский депутат хулари шкулсенче çĕнĕ вĕренÿ çулне йĕркеллĕ пуçланине палăртать. Пур шкулсен çурчĕсене те юсанă, вутă çителĕклĕ хатĕрленĕ. Анчах хулари шкулсенче физикăпа математика преподавателĕсем çитмеççĕ.

А. В. Платонова депутат шкулсенче ачасене вĕрентес ĕçе татăклăн лайăхлатма кирли çинчен тата вырăнти Советсен шкулсемшĕн тимлĕрех тăрăшмалли çинчен каларĕ.

Чăваш АССР Çутĕç министрĕ А. М. Токарев юлташ КПСС XIX-мĕш съезчĕн директивисем тăрăх вăтам шкулсенче вĕрентессине сарса пыма тата пурне те вăтам шкулсенче вĕрентме кирлĕ условисем хатĕрлеме палăртнине аса илтерет.

Çак кăтартăва пурнăçлас тĕлĕшпе республикăра хăшпĕр ÿсĕмсем тунă. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче VIII—X-мĕш классенче вĕренекенсен хисепĕ, унччен-хипе танлаштарсан, тăватă пин çын чухлĕ ÿснĕ. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче вăтам шкулсем 7 уçнă. VIII-мĕш классене 13 пин çынна яхăн вĕренме илнĕ, ку вăл çиччĕмĕш классенче вĕренсе тухнисен 60 проценчĕ чухлĕ пулать.

Шупашкар хулинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен вĕренсе тухнисен 95 проценчĕ вăтам шкулсен VIII-мĕш классĕсене е специалистсем хатĕрлекен шкулсене кĕнĕ. Çитес вĕренÿ çулĕнче Чăваш республикин столицинче пурне те вунă çул вĕрентме тытăнмалла пулать.

Çутĕç министерстви республикăри ытти хуласенче тата ялсенче те пурне те вунă çул вĕрентмелле тăвас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса пырать. Çутĕç пайĕсен вăтам шкулсен ĕçĕ çине тимлĕрех пăхмалла, ачасем пурте аслăрах классенче вĕренччĕр тесе тăрăшмалла.

Шкул çулне ситнĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарас тĕлĕшпе иртнĕ вĕренÿ çулĕнче çителĕксĕр ĕçленĕ. Çавна пула Цĕрачкав, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Иншей районĕсенче нумай ачасем шкул тулашне тăрса юлнă. Çак йăнăшсем кăçал та пулса пыраççĕ. Нирĕн республикăра сентябрĕн 1-мĕшĕнче шкул çулне çитнĕ чылай ачасем шкула пыман. Çутĕç пайĕсемпе учительсем çав ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарма тăрăшаççĕ.

Хăшпĕр район Совечĕсен исполкомĕсем пурне те хут вĕрентес тĕлĕшпе çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă, Улатăр, Вăрнар тата ытти хăшпĕр районсенче нумай ачасем шкула пыман. Ку вăл район Совечĕсен исполкомĕсем ачасене тĕрĕс шута илменнинчен, вĕсене вĕренĕве хутшăнтарма кирлĕ ĕçсене туманнинчен килнĕ.

Токарев юлташ республикăри чылай шкулсен коллективĕсем вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче çитĕнÿсем тунине палăртать. Шупашкар хулинчи, Кувакино, Муркаш, Шупашкар, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи нумай шкулсенче ачасем вĕренÿре лайăх ĕлкĕрсе пыраççĕ.

Анчах вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Первомайски, Шăхасан, Етĕрне районĕсенче тата ытти хăшпĕр районсенче вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен шучĕ чакмарĕ, ÿсрĕ. Красноармейски районĕнчи Именкассинчи вăтам шкулта, Шăхасанти вăтам шкулта, Советски районĕнчи вăтам шкулта тата ытти хăшпĕр шкулсенче кашни виççĕ ачаран пĕри вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасть.

Шкулсенче ачасене вĕрентес ĕç кирлĕ пек пулса пыманнипе совет çыннисем килĕшме пултараймаççĕ. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисен йышĕ хăшпĕр учительсем çителĕксĕр ĕçленĕ пирки пысăк.

Çутĕç органĕсен учитель начар ĕçленипе килĕшме юрамасть. Кашни учителех вĕренекенсене тĕплĕн вĕрентме, нумайрах пĕлÿ пама хушмалла, унтан ыйтăрах ыйтмалла.

Çутĕç пайĕсемпе Чăваш АССР Çутĕç министерстви шкулсене тата учительсене начар ертсе пыраççĕ.

Çутĕç пайĕсем кашни шкула конкретлă ертсе пыма, кая юлнă шкулсене уйрăмах нумай пулăшма, ачасене вĕрентес ĕç мĕнле пынине тĕплĕн тĕрĕслеме, малта пыракан шкулсемпе учительсен опытне пĕрмаях тĕпчесе вĕренме тата анлăн сарма тивĕççĕ. Учительсенчен хăйсене шанса панă ĕçе лайăх туса пыма хытă ыйтмалла, шкулсем начар ĕçленине шайĕшĕн тĕп маяпа мар, вĕсен ĕçĕсене лайăхлатма тăрăшмалла. Пур çутĕç органĕсен ĕçне те, пур шкулсен ĕçне те тĕпчесе вĕренме тата вĕсене ĕçре пулăшса пыма Çутĕç министерстви хытă тăрăшĕ.

О. П. Русина депутат Улатăр районĕнчи шкулсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем çинчен каласа пачĕ. Шкулсен ĕçĕнче çавăн пек çитменлĕхсем пулнăшăн район Совечĕ айăплă, тет вăл. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче вырăнти Советсенчен хăшпĕрисем шкул çулне çитнĕ ачасене шута илсе ĕçе çителĕксĕр тунă. Çавна пула вĕренме тивĕçлĕ ачасенчен чылайăшĕ шкула çÿремен.

Унтан Русина депутат районти шкулсенче учительсем çитменни çинчен каларĕ. Математика вĕрентме аслă шкултан вĕренсе тухнă виçĕ преподаватель тата учительски институтран вĕренсе тухнă икĕ преподаватель халĕ те çитмест.

— Коммунистсен партийĕ, правительство тата пирĕн халăх совет учителĕн ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ,—тет А. М. Шалфеева юлташ.—Партипе правительство халăха вĕрентме тăван атте пек тăрăшнине хакласа, Чăваш республикинчи учительсен пысăк пайĕ ачасене вĕрентес тĕлĕшпе тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлет.

Пирĕн республикăра çĕршер учительсем педагогика ĕçне ăста пĕлекен мастерсем пулса тăчĕç. Вĕсем ачасене кашни çулах лайăх вĕрентеççĕ, çирĕп пĕлÿ пăраççĕ, вĕсем вĕрентекен ачасемпе çамрăксем хушшинче вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайманнисем çук. Халăха вĕрентес ĕçре çитĕнÿсем тунăшăн икĕ пин ытла учителе орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Анчах республикăри шкулсен ĕçĕнче, халăха вĕрентес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Кунта шкулсен ĕçĕнчи уйрăм çитменлĕхсемпе кăлтăксем çинчен мар, республикăра халăха вĕрентес ĕç питех те çителĕксĕр пулса пыни çинчен сăмах пырать. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, Çутĕç министерстви тата вырăнти Советсем çак ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене тума халĕ те тытăнмăн-ха.

Республикăри шкулсен тĕп çитменлĕхĕ вĕсенчен чылайăшĕ вĕренекенсене программăсенче палăртнă таран çирĕп пĕлÿ памапни пулать. Çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчен тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем нумайăшĕ, пĕлĕвĕсем çителĕксĕр пулнă пирки, аслă шкулсене кĕреймеççĕ, пĕр-пĕр ĕçе кăна те начар хатĕрленнĕ.

Шкул ачисем вĕренÿре кирлĕ пек ĕлкĕрсе пырайманнин сăлтавĕ учительсенчен чылайăшĕ уроксене иртерме начар хатĕрленни пулать. Урок пахалăхĕпе вĕрешмен пирки ачасене вĕрентес ĕç лайăх пулса пыраймасть, çакă вара çамрăк ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕçе шĕн сиенлĕ.

Нумай шкулсенче вĕренÿре кая юлакан ачасене пулăшассине начар йĕркеленĕ, учительсем ачасен пĕлĕвĕнчи тата хăнăхăвĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ ĕçсене тумаççĕ.

Юлашкинчен Шалфеева юлташ çапла каларĕ: Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ, хула, район Совечĕсен исполкомĕсем, Çутĕç министерстви тата унăн вырăнти органĕсем, партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсем активлă пулăшнипе, республикăра халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатма тивĕçлĕ ĕçсем тăвĕç.

Чкаловски, Красноармейски тата Елчĕк районĕсенчи шкулсен ĕçĕсем çинчен, вĕрентÿпе воспитани ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен Р. Я. Ахметова депутат, Красноармейски райисполкомĕн председателĕ Г. Ф. Федоров юлташ, Елчĕк райисполкомĕн председателĕ А. С. Степанов юлташ каласа пачĕç.

Прениллесем вĕçленнĕ хыççăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председатель заместителĕ М. А. Андреев депутат юлашки сăмах каларĕ.

Верховнăй Совет республикăра халăха вĕрентес ĕç мĕнле тăни тата ку ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен постановлени йышăнчĕ.

Унтан Верховнăй Совет кун йĕркинчи виççĕмĕш ыйтăва — Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ сессисем хушшинчи тапхăрта йышăннă Указсене çирĕплетес ыйтăва пăхса тухма тытăнчĕ. Ку ыйтупа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ А. И. Измайлов депутат доклад туса пачĕ. Чăваш АССР Шалти ĕçсен министрĕ пулма Н. Д. Вакарова, Чăваш АССР Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев министрĕ пулма Г. А. Мартынова, Чăваш АССР Культура министрĕ пулма П. К. Капитонова, Чăваш АССР Вырăнти тата топливо промышленность министрĕ пулма Н. Н. Боброва, Çул-çĕрпе транспорт хуçалăхĕн управлени начальникĕ пулма П. А. Рунгша уйăрса лартни çинчен Президиум йышăннă Указсене Верховнăй Совет пурте пĕр саслă пулнипе çирĕплетрĕ.

А. И. Измайлов депутат Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ партие çĕнĕ ят панăпа тунă май тата РСФСР Конституцийĕн 130-мĕш статьипе килĕшÿллĕ туса Чăваш АССР Конституцийĕн 93-мĕш статьине улшăнусем кĕртме сĕнчĕ. Унăн сĕнĕвне Верховнăй Совет пурте пĕр саслă пулнипе йышăнчĕ.

Унтан лару председателĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ хупăнни çинчен пĕлтерчĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔСЕМ

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ тата 1952 çулхи бюджета пурнăçлани çинчен тунă доклада сÿтсе явни

М. С. Михайлов депутат сăмахĕ

(Йĕпреç районĕ, Йĕпреç округĕ)

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне пăхса тухма тăратнă республика бюджечĕ партипе правительство 1953 çулта тума палăртнă ĕçсене ăнăçлăн пурнăçлама май парать.

Бюджета пурнăçласси—пысăк задача. Анчах пирĕн Йĕпреç районĕнче 1952 çулхи бюджета тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те пурнăçламан.

Бюджета тупăшсем енĕпе пурнăçламанни, чи малтанах хăшпĕр хуçалăх, кооператив тата суту-илÿ организацийĕсем бюджет умĕнчи обязательствăсене пурнăçламаннинчен тата Чăваш АССР Финанс министерстви тĕрĕс мар планланинчен килет. Сăмахран, оборотран илекен налог 1952 çулхи бюджета 170 пин тенкĕ парса çитереймен. Çав вăхăтрах оперативлă финанс планне çак налог енĕпе I, II тата III кварталсенче район иртерсе пурнăçланă, анчах IV-мĕш кварталта вăра плана 49,1 процент кăна пурнăçланă.

Кооператив тата хуçалăх организацийĕсенчен тупăш тăрăх илекен налог укçи бюджета пурĕ те 58,7 процент çеç кĕнĕ. Çапла вара район бюджетне çак енĕпе 169,3 пин тенкĕ парса çитереймен. Бюджета пурнăçлас ĕç çакăн пек ситлĕксĕр пыни хăшпĕр хуçалăх тата кооператив организацийĕсем производство программине тата накоплени тума палăртнă плана пурнăçламаннинчен килет. Райисполком вара çак организацисем умне тивĕçлĕ требованисем лартман.

Финанс ĕçĕнче кăçал та ситменлĕхсем пур-ха. Район I-мĕш кварталти финанс планне тултарман. Виççĕмĕш кварталта та укçа пухмалли план çитеĕксĕр пурнăçланса пырать. Çавна пула район палăртнă ĕçсене тума укçа-тенкĕ уйăрса парас тĕлĕшпе йывăрлăх тÿсет.

Пĕтĕм Совет государствин, кашни республикăпа районăн кăçалхи бюджечĕн палăрăм уйрăмлăхĕ вăл—социализмла хуçалăхран илекен тупăш ÿсни тата халăхран пухмалли укçа-тенкĕ хисепне чакарни пулать. Пурне те паллă, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем кăсал налогсемпе тăрлĕ тÿлевсен иртнĕ çулхисенчен чылай сахалтарах параççĕ, заемшăн тÿлекен укçа сумми те чылай чакрĕ. Çакă вырăнти органсене государство, хуçалăх, кооператив тата ытти организацисене ертсе пырас, вĕсене тĕрĕслесе тăрас ĕçе лайăхлатма хушать.

Депутат юлташсем! Манăн республикăри хăшпĕр организацисене асăрхаттарас килет. Йĕпрес поселокĕнчи коммунальнăй суртсене юсама хваттершĕн илекен укçана кăна 15,5 пин тенкĕ уйăрса пама пăхнă. Хальхи вăхăтра поселокра коммунальнăй 20 çурта, вĕсенчен пурнăçне тĕпрен юсамалла, унсăрăн çав суртсенче пурăнма май пулас çук. Хваттершĕн илекен укçа çав суртсене юсама çитмест. Коммунальнăй хуçалăх министерстви çакăн çине çаврăнса та пăхмасть. Эпĕ коммунальнăй суртсене юсама укçа уйăрса пама ыйтатăп.

Районти хăшпĕр учрежденисен хăйсен çурчĕсем çук. Республикăри органсем вара райсовет исполкомне çав организацисене суртсем уйăрса пама хушаççĕ. Икĕ çул каярах 1-мĕшпе 2-мĕш участоксенчи халăх сучĕсем пĕр çуртра пулнă. Чăваш АССР Юстици министрĕ Алексеев юлташ, пирĕн района пырсан, çав çурта пăхса юсама йышăннă, укçа уйăрса панă. Пăхса юсанă çурта 1-мĕш участокри халăх судне вырнаçтарнă та 2-мĕш участокри халăх судне çуртсăр тăратса хăварнă. Çавăн хыççăн Алексеев юлташ, райсовет исполкомĕ ячĕпе телеграмма ярса, 2-мĕш участокри халăх судне çурт тупса пама хушать. Районта хăй пулнă чухне вăл çав ыйтупа интересленмен, халăх сучĕсене ăçта тата мĕнлерех вырнаçтарасси синчен шухăшламан. Юстици министрĕ Алексеев юлташ пирĕн районта 2-мĕш участокри халăх сучĕ валли çурт тума пулăшĕ, тесе шутлатăп.

Пирĕн район центрĕнче пĕр вăтам шкул пур. Вăл тимĕсе çуртра вырнаçнă. Шкулта кăçал 700 ытла ача вĕренет. Шкул çурчĕсенче 15 класс кăна пулин те 25 класс вĕренет. Республикăри Министрсен Советĕнчен эпĕ 1954 çулта çав шкул валли çĕнĕ çурт тăвас ыйтăва татса пама ыйтатăп.

Эпĕ хамăр республикăн Министрсен Совечĕ тăратнă 1953 çулхи бюджета çирĕплетме сĕнетĕп.

Бюджета ăнăçлăн пурнăçлас ĕçре кашни предприяти, организаци тата вырăнти Советсем халăх хуçалăхĕн планне пурнăçлассишĕн кĕрешни, укçа-тенкĕпе материалсем расходланă çĕрте государство дисциплинине çирĕп пăхăнни тĕп условипулса тăрать.

Пирĕн республикăри ĕçсыннисем Тăван çĕршыв ырлăхĕпе мухтавĕшĕн çĕнĕ ситĕнÿсем тăвасшăн ырми-канми кĕрешĕç.

В. П. Павлов депутат сăмахĕ

(Шăхасан районĕ, Авăспÿрт Кипеч округĕ)

Депутат юлташсем! Кăçалхи бюджет тăрăх пурăнмалли суртсем тума, социально-культурăллă ĕçсем валли, халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçсем валли пĕлтĕрхинчен нумайрах укçа-тенкĕ уйăрса параççĕ. Çакă вăл Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, культурине ÿстерессишĕн пулăн тăрăшнине кăтартса парать.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче Министрсен Совечĕн председателĕ Маленков юлташ çапла каларĕ: сирĕс ик-виçĕ çул хушшинче çĕршывра апат-çимĕçпе промышленность таварĕсем çителĕклĕ таранах пулмалла тăвас пулать, кирлĕ таварсене пурне те кашни хулара, кашни районта туянма май пултăр. Çавăн пек тăвас тесен, халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине татăклăн ÿйăлатмалла.

Анчах, калас пулать, уйрăм предприятисен руководителĕсем çав-çавах кивĕлле ĕçлеççĕ, производствăри ситменлĕхсене пĕтерме, халăх ыйтнине пур енчен те тивĕстерме тăрăшмаççĕ. Сăмахран, Шăхасан районĕнче промкомбинатпа апат-çимĕç комбиначĕ тата виçĕ промартель пур. Вĕсем пурте хăйсен производство планĕсене тултарса пыраççĕ темелле. Анчах продукци туса кăлармалли плана никĕмĕш вырăнта тăракан япаласем туса кăларнипе тултарма тăрăшаççĕ. Райпромкомбинатăн кăçал районти колхозсем валли 200 стан урапа туса кăлармалла пулсан, пĕррĕмĕш çур çулта пурĕ те 90 стан çеç туса кăларнă. Хуçалăхра кирлĕ пулакан вĕренсем 8 тонна ямалла пулсан, вĕрен пĕр метр та явса хатĕрлемен. «Сталь» промартель урапа масĕ туса кăлармалли плана çуррине те пурнăçламан. Инвалидсен артелĕ çур çулти плана пĕр ăпала енĕпе те тултарман. Кунта Чăвашкоопинсоюз хăйĕн артелĕсен ĕçне лайăхлатма тăрăшманни çинчен каламалла. Чăвашкоопинсоюзĕн ертсе пыракан работникĕсем «Патрон» артеле 3—4 çул хушши пырса курман. Артеле кирлĕ пек пулăшман пирки юлашки вăхăтра вăл начар ĕçлеме пуçларĕ. Иртнĕ çулсенче артель лайăх пашăк-чÿлмексем туса кăларнă пулсан, халĕ вара савсене тума пачах пăрахнă. Вырăнти тата топливо промышленносĕн министерствипе Тарпромсоюз пирки те çавнах калас пулать. Вĕсем те хăйсен предприятийĕсемпе артелĕсене кирлĕ пек пулăшса пымаççĕ. «Стахановец» промартель ситеĕксĕр ĕçлени Тарпромсоюз руководителĕсене нимĕн чухлĕ те хумхантармасть пулас.

Вырăнти тата топливо промышленность министерстви пирĕн районти промкомбинат ĕçĕпе сахал интересленет. Вырăнти тата топливо промышленносĕн министрĕ Бобров юлташ промкомбината çула май сайра хутра 5 минутлăха çеç кĕрсе тухать. Шăхасан районĕн центрĕ Канашпа Шупашкар хушшинчи шосса çулĕ çинче ларман пулсан, тен, Бобров юлташ пирĕн промкомбината 5 минутлăха та кĕрсе тухман пулĕччĕ.

Промышленность предприятийĕсемпе артельсем начар ĕçленине пула районта урапа масĕ, катка-пичке тата ытти кирлĕ таварсене тупса илме çук.

Пирĕн районта халăх сывлăхне сыхлас ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур-ха, Районти больница валли укçа-тенкĕ сахал уйăрса панă пирки 3—4 çул каялла тума пуçланă рентген кабинетне халĕ те туса пĕтермен.

Тата çакна палăртмалла: район больницине кашни çулах юсаççĕ. Анчах кашни çулĕнчех мачча сеппе стенасене шурăтса укçа-тенкĕ нумай расходлаççĕ. Ку мĕнрен килет-ха ĕнтĕ? Çурт тăррине витме тимĕр ниçта та тупса илме çук. Çавăнпа çумăр анса маччасемпе стенасене пăсса пĕтерет, больницăн вара кашни çулах пĕр ĕç туma тивет.

Çаксене шута илсе, 1953 çулхи бюджетра Шăхасанти больницăна тĕпрен юсама 30 пин тенкĕ укça уйăрса пама сĕнетĕп.

Укçа-тенкĕ çитеĕксĕр уйăрса панă пирки Ямашри вăтам шкул, Энтриялĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкул çурчĕсене халĕ те туса пĕтермен. Вĕсем валли сахалтан та 70 пин тенкĕ укçа кирлĕ.

Пĕр-икĕ сăмах суту-илÿ организацийĕсем çаврăнăçусăр ĕçлени çинчен те каласа хăвармалла. Магазинсемпе ларексенче куллен кирлĕ таварсене: чугунсем, сăрасем, кăмака хатĕрĕсем тупса илме çук. Лаша кÿлмелли хатĕрсене лавккаран илнĕ хыççăн, тепĕр хут пăсса юсатарма тивет. Нумай таварсен пахалăхĕ начар. Кун пирки Чăвашпотребсоюзăн тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Хамăр районти ĕçсыннисен ячĕпе эпĕ çапла калатăп: эпир социализмла Тăван çĕршыв вăй-хăватне ÿстерессишĕн малалла та хамăрăн вăя шеллемесĕр хастарлă ĕçлĕпĕр, партипе правительство заданийĕсене ялан вăхăтра тултарса пырăпăр. Халăх хуçалăх планне тултарса, коммунизм строительствине çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнÿсем туса пырăпăр.

Н. П. Енчиков юлташ сăмахĕ

(Шупашкар кула Совет исполкомĕн председателĕ)

Депутат юлташсем! Республика столицинчи ĕçсыннисем партипе правительства халăх ырлăхĕшĕн тăрăшнине хăйсен хулинче куллен курса тăраççĕ. Юлашки çулсенче хула нумай ушăнса лайăхланчĕ.

Хулара союзлă министерствăсене пăхăнса тăракан предприятисен шучĕ ÿсет. Кăçал сĕт-çу заводĕ тата ытти предприятисем туса лартма тытăннă. Чăлха тата трикотаж фабрики туса лартма палăртнă. 1954 çулта лента тĕртекен фабрикăна çĕнетсе пысăклатаççĕ. Пир-авăр комбиначĕн иккĕмĕш черетне тума проектсем хатĕрлеççĕ. Çав комбината тума 700 миллион тенкĕ, пурăнмалли суртсем, культура учрежденийĕсем, ача сачĕсемпе яслисем тума 160 миллион тенкĕ расходлама палăртаççĕ.

Хулара пурăнмалли суртсем, шкулсем, ача сачĕсемпе яслисем çулсеren чылай лартаççĕ. 1952 çулта пурăнмалли суртсем, шкулсемпе халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисем лартма, хулана лайăхлатса илемлетме бюджетран тата тĕрлĕ ведомствăсемпе предприятисен укçи тенкинчен пурĕ 18,3 миллион тенкĕ хывнă. 1953 çулта асăннă ĕçсене тума 32 миллион тенкĕ уйăрса пама палăртнă.

1952 çулта Шупашкар хулин бюджетне тупăшсем енĕпе 108,5 процент, расходсем енĕпе 101,2 процент пурнăçланă. Анчах çакна палăртас пулать: хула Совет исполкомĕ бюджета пур кăтартусем енĕпе те тултармалла тăваймарĕ, çавăн пирки бюджета 575,8 пин тенкĕ парса çитереймерĕ.

1953 çулхи бюджета 8 уйăх хушшинче 69 процент пурнăçланă. 1952 çулхипе танлаштарсан, оборотран илекен налог пухас ĕç лайăхрах пулса пырать, тăхăр уйăхри плана сакăр уйăхра 93,6 процент тултарнă. Пир-авăр, атă-пушмак туса кăларакан, пулă тытакан предприятисем тата вырăнти промышленность оборотран илекен налог хывмалли çултаăхри плана иртерсе тултарчĕç. Бюджет умĕнчи хăйĕн тивĕсне, иртнĕ çулсенчи пекех, Шупашкарти аш-какай комбиначĕ ситеĕксĕр пурнăçласа пырать.

Промышленность предприятийĕсен тата культура учрежденийĕсемпе ĕçсыннисен йăла ыйтăвĕсене тивĕстерекен учрежденисем туса лартма укçа-тенкĕ нумай расходлатпăр пулин те, хула хуçалăхĕ ситеĕксĕр аталанса пырать-ха. Хулара пурăнмалли çуртсем çитмеççĕ, халăх йышĕ пурăнмалли суртсем лартнинчен хăвăртрах ÿсет. Çавăнпа учительсене, врачсене, культурăпа искусство работникĕсене, служащисене хваттер тупса парас тĕлĕшпе чылай йывăрлăхсем пулаççĕ. Промышленность предприятийĕсемпе ведомствăсем те хăйсен работникĕсемпе служащийĕсем валли пурăнмалли суртсем ситеĕксĕр лартаççĕ. Уйрăмах пир-авăр комбинатĕнче, электроаппаратура заводĕнче, чăлха фабрикинче чылай рабочисемпе служащисен хваттер çук. Çав вăхăтрах «Легпромстройăн» 11-мĕш тресчĕ, «Чувашстрой» трест тата ытти хăшпĕр предприятисемпе организацисем пурăнмалли суртсем лартма уйăрса панă укçапанийĕне çулсерен усă курмаççĕ, суртсене вăхăтра туса пĕтермеççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ хула хуçалăхне хăвăртрах аталантарма пире ситеĕклĕ пулăшни çук-ха.

Пурăнмалли суртсем чылайăшĕ кивелнĕ, вĕсене юсама укçа-тенкĕ сахал уйăрса параççĕ. Уйрăмах предприятисемпе ведомствăсем хăйсен пурăнмалли çурчĕсене ярăх пăхнине палăртас пулать. Ялхуçалăх тата хатĕрлев министерстви хăйĕн çуртне, вăл кивелсе çитнĕ пулин те, юсамасть, ăна юсама уйăрса паракан укçа-тенкĕпе усă курмасть. Çавăн пекех Сывлăх министерстви те хăйĕн çурчĕсемшĕн тăрăшмасть, уйăрса панă укça-тенкĕпе кирлĕ пек усă курмасть.

Хула малалла лайăхланасси водопроводпа канализаци çукки нумай килет. Коммунальнăй хуçалăх министерствипе Министрĕсен Совечĕ хулана малалла лайăхлатас ыйтусене вăхăтра татса памаççĕ. Çак ыйту çине ытларах çаврăнса пăхас пулать.

Хула хуçалăхне аталантарас ĕç ситеĕксĕр пулса пынишĕн хула Совет исполкомĕпе хулари хăшпĕр предприятисен руководителĕсем те айăплă. Эпир хула Совет исполкомне пăхăнса тăракан предприятисен ĕçне ситеĕксĕр тĕрĕслесе тăратпăр-ха. Хăшпĕр строительство организацийĕсем укçа-тенкĕпе материалсем ситеĕклĕ пур пулин те, плана тултармаççĕ. Уйрăмах кăсалхи пĕррĕмĕш çур çулта уйăрса панă укçа-тенкĕпе япăх усă курнă. Пурăнмалли суртсем тăвас тата юсас ĕç пахалăхĕ начар.

Юлашки вăхăтра хула Совечĕн исполкомĕ строительство валли уйăрса панă укçа-тенкĕпе лайăхрах усă курас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртерчĕ, çултаăхи ăсĕсленинчен халăх хуçалăх планĕнче тата бюджетра палăртнă ĕçсене туса çитерĕпĕр.

Шупашкар хулинчи ĕçсыннисем 1953 çулхи халăх хуçалăх планне тата бюджета тултарассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлесе пырĕç.

Чăваш АССР-ĕнче халăха вĕрентес ĕç мĕнле тăни тата кÿ ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен тунă доклада сÿтсе явни

Р. А. Садовникова депутат сăмахĕ

(Сĕнтĕрвăрри районĕ, Сĕнтĕрвăрри округĕ)

Депутат юлташсем! Пирĕн çĕршывра халăха вĕрентес ĕç валли çултан-çул укçа-тенкĕ ытларах уйăрса параççĕ. Çакă вăл пирĕн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи тĕслĕхрен те питĕ лайăх курăнать. Çак ĕç валли районта 1945 çулта 1 миллион та 975 пин тенкĕ панă пулсан, 1953 çулта 4 миллион та 25 пин тенкĕ уйăрса панă.

Партипе правительство халăхшăн тăрăшнипе хавхаланса, республикăри, çав шутра пĕрлех Сĕнтĕрвăрри районĕнчи учительсем 1952—1953-мĕш вĕренÿ çулĕнче хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç, вĕренÿ ĕçĕн пахалăхне ÿстерчĕç. Шкул ачисен малаçупа çыру тĕлĕшĕнчи культури ÿсрĕ, вĕсен сăмах запасĕ пуянланчĕ, вĕсем тĕрĕс çырма лайăхрах хăнăхса пыраççĕ. Математика, физика, хими вĕрентесси содержани енчен чылай лайăхланчĕ, ĕçпе сыхăнса пыма пуçларĕ. Биологие вĕрентекен учительсенчен нумайăшĕ хăйсен ĕçне тĕпрен çĕнетрĕç.

Комсомол тата пионер организацийĕсен ачасем хушшинчи влиянийĕ ÿсрĕ. Çаксем пурте вĕренекенсен пĕлĕвне ÿстерме пулăшрĕç.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕн итогĕсем нумай вĕренекенсен пĕлĕвĕсем çирĕпрех пулнине кăтартса пачĕç. Сăмахран, Чермĕшпе Шульгинăри пуçламăш шкулсенчи ачасем вĕренÿре пурте ăлкăрсе пычĕç. Районĕпе 46 класра вĕренекенсем пурте пысăкрах класа куçнă е вĕренсе тухнă.

Халăха вĕрентес ĕçри хăшпĕр çитĕнÿсемпе пĕрлех пысăк ситменлĕхсем те пур. Шкул çулĕнчи 14 ачана вĕренĕве явăçтарман. Хăшпĕр шкулсем вĕренекенсене шкула çÿреме пăрахтарас мар тесе ситеĕклĕ тăрăшман, çавăн пирки 21 ача тивĕçлĕ сăлтавсăр шкула çÿреме пăрахнă.

Пĕтĕм районĕпе илсен, вĕренекенсенчен 83.2 проценчĕ кăна ăлкăрсе пынă. Вĕренÿре ăлкăрсе пырайманнисен шучĕ уйрăмах Урасовăри, Чăрăшкассинчи, Упакассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулсенче тата Ăстакассинчи пуçламăш шкулта пысăк. Упакассинчи сиччĕмĕш класенчи 40 вĕренекентен 21-шĕ çеç шкултан вĕренсе тухнă.

Çак ситменлĕхсем вĕрентÿ ĕçне çителĕклĕ тĕрĕслесе пыман пирки пулнă. Шкул директорĕсем нагляднăй пособисем кÿрсе килесси çине ситеĕклĕ пăхмаççĕ. Вăтам шкулсенче хими, физика, биологи урокĕсенче практикăлла ĕçсем тума уйрăм кабинетсем тата лабораторисем çук.

Районти сутĕç пайĕ учительсене методикăлла пулăшу парассине кирлĕ пек организацилемен, учительсен идейăпа политика тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕсене тата ĕçри квалификацине ÿстерес ĕçе начар йĕркеленĕ. Начар ĕçлекен шкулсемпе учительсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăни çук. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче 32 шкултан 21 шкулăн ĕçне кăна тĕрĕсленĕ. Халăх хушшинче ача-пăчана семьере тата шкулта воспитани парасси çинчен докладсемпе лекцисем сахал тăваççĕ.

Районти шкулсене вĕренÿ çулне хатĕрлес ĕçе вăхăтра пуçланă. Проектпа смета пулман пирки пĕр Турханкассинчи вăтам шкул çуртне кăна юсаман. Республикăри Сутĕç министерстви çак ыйтупа интересленмест. Шкулсене тĕпрен юсама бюджет тăрăх уйăрса панă укçатенкĕпе туллин усă курасси проектсемпе сметăсем çук пирки чăрăнса тăрать.

Пирĕн хулари коммунальнăй хуçалăх çумĕнче, республикăри ытти районсенчи пек, строительствăна юсав ĕçĕсен кантурĕ çук. Çавăнпа юсав ĕçĕсене хуçалăхла майпа тăваççĕ, ĕçлеме уйрăм çынсене тара тытаççĕ. Çапла тунипе юсав ĕçĕсем хакла лараççĕ. Ку вара финанс дисциплинине пăсасси патне илсе пырать. Республикăри Министрсен Совечĕн çак ыйтăва татса памалла.

Районта çĕнĕрен шкулсем тăвас ĕç ситеĕксĕр пырать. Шкул çурчĕсем нумайăшĕ кивелнĕ. Хăшпĕр шкулсенче классем валли суртсем çитмеççĕ. Сăмахран, Турханкассинчи вăтам шкулăн çурчĕ питĕ кирлĕ, классем валли суртсем çитмеççĕ. Кунта çĕнĕ шкул çурчĕ кирлĕ. Кăçал Шуркассинчи сичĕ çул вĕренмелли шкултан вăтам шкул тунă, анчах вĕренекенсене вырнаçтарма суртсем ситеĕксĕр. Ялта пушă ларакан çурт пур, анчах ăна юсамалла. Эпир Чăваш республикинчи Министрсен Советĕнчен çавна юсама ситес çул 100 пин тенкĕ укçа уйăрса пама ыйтатпăр.

Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта занятисем виçĕ сменăпа пулса иртеççĕ, анчах республикăри Министрсен Совечĕ хулара вăтам шкул валли çĕнĕ çурт лартасси синчен хăй йышăннă решение вăраххăн пурнăçлать.

Депутат юлташсем! Пирĕн çĕршывра пур енĕпе те нумай пĕлÿ илнĕ тата культурăллă çынсем вĕрентсе хатĕрлеме мĕн кирлине пурне те туса панă. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви, совет халăхĕ пирĕн ачасене наука никĕсĕсене вĕренме, хăйсен ăс-тăнĕсене пуянлатса пыма мĕн кирлине пĕтĕмпех туса параççĕ. Пирĕн учительсен тата халăха вĕрентес ĕçри работниксен Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăя хурса тата пĕлĕве парса ĕçлес пулать.

В. М. Иванова депутат сăмахĕ

(Çĕрпÿ районĕ, Çĕрпÿ округĕ)

Районти шкулсемпе учительсенчен нумайăшĕ вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн идейăпа теориллĕ шайне ÿстерес енĕпе чылай пысăк ÿсĕмсем турĕç.

Анчах та шкулсенче вĕрентÿпе воспитани ĕçĕ ситеĕксĕр пулса пырать. Иртнĕ вĕренÿ çулĕ вĕçĕнче 5.354 вĕренекентен 965 ача ăлкăрсе пыраймаçт. Хăшпĕр шкул руководителĕсемпе учительсем хăйсене хушнă ĕçе кирлĕ пек туса пымарĕç, ĕçе сиелтен туса пычĕç. Вĕсем вĕрентÿпе воспитани ĕçĕшĕн общественноспа государство умĕнчи ответлăха туйса ĕçлемерĕç. 1952—1953 çулхи вĕренÿ çулĕн итогĕсем уйрăмах Уйкасри сичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсене ситеĕксĕр пĕлÿ панине кăтартса пачĕç. Кунта 199 вĕренекентен 50 ача хăйсем вĕреннĕ классенчен тепĕр классене куçайман.

Патăрьелĕнчи сичĕ çул вĕренмелли шкулта 301 вĕренекентен 62 ача тепĕр класа куçайман. Тусири сичĕ çул вĕренмелли шкулта 169 вĕренекентен 65 вĕренекене малтан вĕреннĕ классенче тепĕр çул вĕренме хăварнă. Çак шкулти сиччĕмĕш класри 42 вĕренекентен 30 ача вĕренсе тухайман. Уйрăмах шкулта вырăс чĕлхипе ăлкăрсе пырайманнисем нумай: 64 ачаран 43 ача ăлкăрсе пыраймаç.

Вырăс чĕлхине вĕрентес ĕç иртнĕ çулта 1951—1952-мĕш вĕренÿ çулхинчен лайăхланни курăнмарĕ. Вырăс чĕлхипе—çыру ĕçĕсем енĕпе 546 вĕренекен, калас урокĕсем енĕпе 324 вĕренекен ăлкăрсе пыман.

Кăçалхи вĕренÿ çулĕн пуçламăшĕнче те пысăк ситменлĕхсем палăраççĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасенчен 99 çынна вĕренĕве явăçтарман.

Пурне те вунă çул вĕрентмелле тума хатĕрленес ĕç сичĕ çул вĕрентмелли закона тĕплĕн пурнăçласа пыма хушать. Анчах хăшпĕр ял Совет председателĕсемпе шкул руководителĕсем çак закона пурнăçлассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, ачасене вĕренÿ çулĕ пуçламăшĕнче шкула явăçтараççĕ те каярахпа вара вĕсен вĕренÿ условийĕсемпе интересленме пăрахаççĕ. Çапла, сăмахран, иртнĕ вĕренÿ çулĕнче районĕпе 262 вĕренекен шкула çÿреме пăрахнă.

Пирĕн районта хут пăлменнисем 87 тата хутла сахал пĕлекеннисем 251 çын шутланать. Районти сутĕç пайĕ хут вĕренмесĕр юлнă çынсене вĕрентес тĕлĕшпе начар ĕçлет.

Халăха вĕрентес ĕçе лайăх йĕркелесе яма условисем туса çитермен-ха. Чылай шкул çурчĕсем вĕрентме юрăхсăр. Сăмахран, Первомайскинчи сичĕ çул вĕренмелли шкулăн пуçламăш класĕсене клуба вырнаçтарнă. Унта кăнтăрла ачасем вĕренеççĕ, каçсерен вара ял çыннисем валли культурăлла ĕçсем иртереççĕ. Çапла вара кунта санитарипе гигиена правилисене пурнăçлама, педагогика ыйтăвĕсене тивĕçтерме май çук. Çĕрпÿри вăтам шкулта пÿлĕмсем ситмен пирки ачасене икĕ сменăпа вĕрентеççĕ.

Чăвашкниготоргпа республикăри тивĕçлĕ ытти организацисем учебниксем вăхăтра ситерсе тăманни те шкул ĕçĕнче пысăк чăрмав кÿрет. Чылай шкулсене кăçал нумай предметсемпе учебниксем çитмеççĕ, лабораторисем валли кирлĕ хатĕрсем те питĕ сахал. Сутĕç министерстви шкулсене учебниксем тата ытти материалсем парса тăрас тĕлĕшпе ытла та сахал тăрăшать.

Кăçалхи вĕренÿ çулне хатĕрленес ĕçе районта чылай кая юлса тытăнчĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ шкулсене юсаса пĕтересси вăраха кайрĕ. Тутарла Канашри пуçламăш шкула паян кун та юсаса çитермен. Шуртавăшри, Уйкасри сичĕ çул вĕренмелли, Чиричкассинчи пуçламăш тата Елашри шкулсем валли хатĕрленĕ вутта халĕ те турттарса пыман. Тата ытти ситменлĕхсем те нумай. Çав ситменлĕхсем пуринчен малтан районти сутĕç пайĕ шкулсен ĕçне кирлĕ пек ертсе пыманнинчен килсе тухнă. Сутĕç министерстви Çĕрпÿ районĕнчи шкулсемпе сахал интересленет. Кăçалхи январь уйăхĕнчен пуçласа паян кун та районти сутĕç пайĕн заведующийĕ çук.

Республикăри Сутĕç министерстви учительсене тăтăшах улăштарса тăрать, шкулсене лайăх кадрсемпе çирĕплетме тăрăшмасть. Кăçалхи август уйăхĕнче те чылай учительсене улăштарнă.

Районти суйлавçăсен ыйтăвĕсене шута илсе, Чăваш АССР Министрĕсен Советне Вăрăмсутри сичĕ çул вĕренмелли тата Çĕрпÿри вăтам шкулсен çурчĕсене тăвассине халăх хуçалăхĕн 1954 çулхи планне кĕртме сĕнетĕп. Шĕнер ялĕ таврашĕнче 10 çухрăмри ялсенче пĕр вăтам шкул та çук. 1954 çулта Шĕнер ялĕнче вăтам шкул тума палăртма çавăн пекех Старакри, Висикассинчи тата Çĕрпÿри вăтам шкулсем çумĕнче 40-шар ача пурăнмалăх интернатсем усма укçа пама ыйтатăп.

Депутат юлташсем! Пирĕн парти умра тăракан задачăсене пурнăçлас ĕçри ситменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе пыма хушать.

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче ССР Союзĕн Министрсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Совет çĕршывĕ умĕнче аслă задачăсем тăраççĕ. Çав задачăсене пурнăçа кĕртни пирĕн Тăван çĕршыва çĕнĕ пусăма çĕклет, халăх пурнăçне тата ытларах лайăхлатать, социализмла обществăна пур енчен те чечеклентерет».

Совет учителĕсем, мĕнпур ĕçсыннисемпе пĕрле, Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ каларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн ырми-канми кĕрешĕç.

А. П. Васильева депутат сăмахĕ

(Шăмăршă районĕ, Шăмăршă округĕ)

Депутат юлташсем! Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе пирĕн республикăри хуласемпе ялсенче шкулта вĕренекен ачасен, вăтам шкулсен хисепĕ ÿссе пырать. Пирĕн Шăмăршă районĕнче халĕ виçĕ вăтам шкул ĕçлет, вĕсенче 1.312 çын вĕренет. Районта çавăн пекех сичĕ çул вĕренмелли 14 шкул тата 14 пуçламăш шкул ĕçлет. Вĕсенче пурĕ 4,025 çын вĕренет.

Иртнĕ вĕренÿ çулĕ вĕрентÿпе воспитани ĕçĕ чылай лайăхланнине кăтартса пачĕ. Чылай учительсем, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе хавасланса, самрăк ăрăва воспитани парас ĕçе лайăхлатрĕç. Анчах халăха вĕрентес ĕçре халĕ те пысăк çитменлĕхсем пур-ха, çак ĕç паянхи задачăсене тивĕçтерме пултараймасть.

Пĕлтĕр районта пурне те обязательнăй йĕркепе сичĕ çул вĕрентмелли закона пурнăçласа çитереймен. Чылай ĕçлекен хыççăн шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтарнăччĕ, анчах каярахпа 24 ача вĕренме пăрахнă, 1951—1952-мĕш вĕренÿ çулĕнче вĕренÿре ăлкăрсе пыманнисен хисепĕ 18,1 процент, 1952—1953-мĕш вĕренÿ çулĕнче 16,2 процент пулнă. Вĕренекенсем уйрăмах вырăс чĕлхипе тата математикăпа ăлкăрсе пыраймаççĕ. Ку вăл хăшпĕр учительсем хăйсем те çителĕксĕр хатĕрленнинчен килет. V—X-мĕш классенче вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен 39 учительтен 13 учителĕн кирлĕ чухлĕ пĕлÿ çук. Чылай учительсен опыт çителĕксĕр, вĕсем халĕ заочно йĕркепе вĕренсе хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстереççĕ.

Вăтам шкулсенче ĕçлеме аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă учительсем чылай кирлĕ. Анчах Чăваш АССР Сутĕç министерстви района аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă учительсем кирлĕ чухлĕ ярса памасть. Çавна пула физика, математика предмечĕсене тивĕçлĕ пĕлÿ илмен учительсем вĕрентеççĕ. Çакă, паллах, вĕренÿ пахалăхне чакарать. Çавăн пекех шкулсенче политехникăлла вĕренĕве йĕркелес ĕç те начар пулса пырать. Учительсем чылайăшĕ нагляднăй пособисемпе усă курмаççĕ, Вĕренекенсене лабораторисенче, практикăлла занятисенче ĕçлеттермеççĕ. Экскурсисем сахал иртереççĕ.

Районти шкулсенче нагляднăй пособисем çителĕксĕр, физикăпа хими кабинечĕсем, приборсем сахал. Лабораторилле ĕçсем иртермелли реактивсене вырăнта тупса илме çук. Шупашкарти вĕренÿ хатĕрĕсем сутакан магазин шкул директорĕсем ыйтнă приборсене ярса памасть, каймас, складра выртакан япаласене ярса пама тăрăшать. Çак ситменлĕхсене пĕтермелле.

Физкультура занятийĕсене иртерме кирлĕ оборудовани те çителĕксĕр. Сутĕç министерстви шкулсене çавăн пек хатĕрсем ситеĕклĕ илсе пама тăрăшмалла. Суту-илÿ организацийĕсем шкулсенче [illegible] тытма кирлĕ бачокĕсем, курпасем, ытти тĕрлĕ хатĕрсем илсе килсе сутмаççĕ. Шкул участокĕсенче ĕçлеме кирлĕ хатĕрсем çук.

Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче те ситменлĕхсем пур-ха. Хăшпĕр шкулсенче шыв вĕретмелли, теприсен вутă сарайĕсем çук. Чылай шкулсен вутă ситеĕксĕр, Районти сичĕ шкулăн вутă çук. Çакă вăл вăрман хатĕрлекен организацисене шкулсем валли вутă тата строительство материалĕсем кирлĕ чухлĕ уйăрса пама кăтарту паманнинчен те килнĕ.

Района 1954 çул валли вăрман уйăрса панă. Анчах унта шкулсем валли вутă е строительство материалĕсем уйăрса парасси çинчен пĕр сăмах та каламан. Пирĕн района строительство материалĕсем—пахăл, тимĕр, сĕр, [illegible] тата ыттисене те начар памаççĕ. Шкулсен ыйтăвне тивĕçтерес тĕлĕшпе тимлĕрех пулни кирлĕ.

Кăçалхи вĕренÿ çулĕ ăнăçлăн пуçланчĕ пулин те, малтанхи кун 69 ача шкула пыман. Вырăнти Советсемпе учительсем тăрăшнипе шкула çÿреме тивĕçлĕ ачасене пурне те вĕренĕве хутшăнтараççĕ.

Республикăри организацисене эпĕ шкулсен нушисене шута илме, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕстерме ыйтатăп. Халăха вĕрентес ĕçе партипе правительство ыйтнă пек тума тăрăшăпăр.